Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938
НОЙАБӖР
15
ЫТЛАРИКУН
262 (5075) №

Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухать   ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ   Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕҪӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, ред. заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн—4—40, парти пурнӑҫ пайӗн—7—97, ялхуҫалӑх пайӗн — 4—97, совет строительстви пайӗн—0—88, промышленнӑҫ пайӗн—0—85, ялкорсен пайӗн—2—30, дежурнӑйӗн — 6—23.

Халӑх переписӗне кӑтартулӑн хатӗрленсе иртерер

Совет правительстви халӑх переписне 1939 ҫулта йанвар уйӑхӗнче иртерме йышӑннӑ. Халӑх переписӗ вӑл—государствӑн пит кирлӗ ӗҫӗ, унӑн результачӗсем халӑх хуҫалӑхне планлас тӗлӗшпе пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ.

Сталинла иккӗ пилӗкҫуллӑхсен ҫулӗсем хушшинче пирӗн ҫӗршыв тӗпренех улшӑнчӗ. Октябӗр уйӑхӗн кунӗсенче совет халӑхӗ 21 ҫул хушшинче тунӑ ҫитӗнӳсене мухтавлӑн паларттре.

Ҫӗршывпа пӗрле ҫынсем те исорире халиччен пулман хӑвӑртлӑхпа ӳссе ҫитӗнчӗҫ. Вӗсен культури, производствӑлла квалификацийӗ, пӗлӗвӗ нумай ӳсрӗ.

Ҫитес перепис социализм ҫӗнтерӗвӗ тунӑ ҫак улшӑнусене, партипе правительствӑ ҫынсемшӗн тӑрашнине пӗтӗмпех тӗрӗс палӑртса пирӗн пурнӑҫа тӗкӗр ҫинчи пек пӗтӗм тӗнчене кӑтартса парӗ.

Анчах переписӗн задачисем ҫакӑнта ҫеҫ мар-ха. Халӑх переписӗн цифрисем виҫҫӗмӗш пилӗкҫуллӑхра хуҫалӑхпа культура строительстви ӗҫӗнче, коммунизм тунӑ ҫӗрте кирлӗ пулаҫҫӗ.

Халӑх тӑшманӗсем—троцкисла-бухаринла, буржуала-националистла бандитсем, фашиссене сутӑннӑскерсем, халӑх переписӗ мӗнле пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине лайӑх пӗлсе тӑнӑ, вӗсем 1937 ҫулта иртернӗ перепис ӗҫне аркатма тӑрӑшнӑ, правительствӑ йышӑннӑ инструкцине пӑсса пынӑ, халӑх шутне йӳрийӗх чакарнӑ.

Перепис ӗҫӗн аннҫалӑхӗ — переписе иртерме пур йенчен те кӑтартулӑ хатӗрленнинчен килет. Халӑх переписне хатӗрленессин пирвайхи тапхӑрти ӗҫсене—хуласенче килсен списокӗсене, йалсенче ҫынсем пурӑнакан вырӑнсен списокӗсене тунӑ, йалсоветсен схемӑллӑ карттисене тунӑ, районри карттӑсемпе плансене, пӗтӗмӗшле илсен, тӗрӗслесе, тӳрлетсе тухнӑ. Перепис йертсе пыракан тата массӑллӑ кадрсене суйласа илсе ҫирӗплетессипе те правительствӑ кӑтартнӑ срукӗсене туса иртернӗ. Халӗ перепис кадрӗсене вӗрентсе ӗҫ пырать.

Чӑваш республикӗнче перепис пайӗсем—77, инструктӑр участокӗсем—395, счотчиксен участокӗсем—1966 пулаҫҫӗ. Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ переписре ӗҫлеме пурӗ—3.531 ҫын ҫирӗплетнӗ. Вӗсенчен нумайӑшӗ—активистсем: ССРС, РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗ вӑхӑтӗнче агитатӑрсем, беседчиксем пулса ӗҫленӗ, вӗсем совет переписӗнче ӗҫлени кӗскерсем. Переписре ӗҫлеме ҫирӗплетнӗ ҫынсенчен 88 проценчӗ аслӑ шкулсенчен вӗренсе тухнисем.

Анчах уйрӑм районсенче переписре ӗҫлеме ҫынсем суйласа илесси ҫине ҫийелтен пӑхнӑ. Варнарпа Турхан районӗсенче ку тӗлӗшпе ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн кӑтартӑвӗсене пӑснӑ. Ку районсенче перепис кадрӗсене малтан сӑнамасӑрах, райӗҫтӑвком президиумӗ ларӑвне чӗнмесӗрех ҫирӗплетнӗ. Ҫавӑнпа та перепис иртерме уйӑрнисен хушшинче политикӑ тӗлӗшӗнчен шанчӑксӑр ҫынсем кӗрсе кайма пултарнӑ.

Хальхи вӑхӑтра перепис кадрӗсене тӗрӗслес ӗҫ пырать. Анчах парти райкомӗсемпе райӗҫтӑвкомсенчен хӑшпӗрисем ҫак ӗҫрен пӑрӑнса йулма пӑхаҫҫӗ, вӑл ӗҫе пӗтӗмпех халӑх хуҫалӑхӗн районри инспекторӗсем ҫине хураҫҫӗ (Ҫӗмӗрле т. ыт. те).

Чылай районсенче, уйрӑмӑнах Шӑнкӑртам, Улатӑр, Трак т. ыт. те переписре ӗҫлеме уйӑрнӑ ҫынсене халиччен ӗҫленӗ вырӑнтан урӑх вырӑна куҫарнӑ тӗслӗхсем пур. Ҫакӑн пек тунипе вӗсем перепис кадрӗсене пӑтраштараҫҫӗ, перепис хатӗрленессине сийен кӳреҫҫӗ.

Халӑх перепиҫне масса хушшинче ӑнлантару ӗҫне тивӗҫлӗн сарсан тин ӑнҫӑлӑн иртерме пулать. Перепис иртерни—совет халӑхне хайне кирли ҫинчен, вӑл рабочисемпе хресченсен социализмла государствине ҫирӗплетме пулӑшни ҫинчен кашни ҫынна тӗплӗн ӑнлантарса парас пулать. Совет правительстви совет гражданинне пана сведӗнисен вӑрттӑнлӑхне саккун тӑрӑх ҫирӗп тытса усрать, никама та пӗлтермест. Ҫавӑнпа пӗрлех тата правительствӑ постановленийӗнче: хайсем ҫинчен йӳрийӗх тӗрӗс мар суйа сведӗнисем паракан ҫынсене судпа айӑплаҫҫӗ, тесе каланӑ. Ҫаксем ҫинчен ҫынсене лайӑх каласа пани кирлӗ. Халӑх тӑшманӗсем ку переписре те сӑтӑрлама тӑрӑшӗҫ. Попсем, чиркӳ ҫыннисем тӗн сӗрӗмӗпе усӑ кураҫҫӗ, халӑха тӗрлӗ майсемпе улталаса перепис ӗҫне арктатма шутлаҫҫӗ. Ҫакна уйрӑмӑнах шута илсе, вырӑнсенче тӗне хирӗҫле ӑнлантару ӗҫне вӑйлатни кирле. Тӑшманла ӗҫсене вӑхӑтра тӑрӑшыв ҫине каларса, тивӗҫлӗ отпор памала.

Нумай районсенче (Ҫӗмӗрле, Хӗрлӗ Чутай, Турхан, Шӑнкӑртам, Патӑрйел т. ыт. те) массӑллӑ-ӑнлантару ӗҫне йӗркелемен. Районсенчи йертсе пыракан организацисен массӑллӑ-ӑнлантару ӗҫне организацилессипе хӑйсен аллине илмеле. Партипе комсомол тата профсойуз организацисен переписе хатӗрленесси ҫинчен халех тӗплӗн сӳтсе-йавас пулать. Райӗҫтӑвкомсен те ку ыйтупа йатарласа пленум ларӑвӗсене туса иртермеле. Йалсоветсемпе колхоз председателӗсене перепис хатӗрленес тӗлӗшпе мӗн тумалине ӑнлантарса парас пулать. Предприйатисемпе колхозсем ҫумӗнчи перепис иртерме пулӑшакан комиссисен ӗҫне вӑйлатмала, вӗсене пухса канашлу туса иртермеле. Агитатӑрсемпе беседчиксене участоксем тӑрӑх уйӑрса ҫирӗплетмелле, вӗсене мӗн ӗҫлемелле ӑнлантарса памала. Политпросвет работникӗсен, радио узелӗсен, районри хаҫатсен, стена хаҫачӗсен переписе хатӗрленес ӗҫе тивӗҫлипе хутшӑнмала.

Переписе хатӗрленессинче пӗр ӗҫ те кайа йулса пыни ан пултӑр. Халӑх переписӗ ҫинчен кашни гражданин лайӑх пӗлсе тӑтӑр, перепис ӑнҫӑлӑхӗшӗн кашни ответлӑ пулнине туйтӑр.

Халӑх переписне иртермели кун ҫывхарса килет. Пур ӗҫсем тӑрӑх та тӗплӗн хатӗрленсе ҫитес пулать. Перепис пайӗсем инструктӑр участокӗсем валҫи ҫуртсем тупса хумала, хуласенче урам йачӗсене, ҫуртсене тата хватерсене номӗрлессине йӗркелемеле т. ыт. те.

Перепис ӗҫне хакламаннине хирӗҫ татӑклӑн кӗрешес пулать. Перепис иртересси—вӑл политикӑллӑ ответлӑ ӗҫ, вӑл пӗтӗм халӑх ӗҫӗ. Партипе совет, комсомол, профсойуз тата пӗтӗм совет общественнӑйӗн переписе кӑтартулӑн иртерме большевикла хатӗрленмелле.

Ҫамрӑк стаханӑвӗҫсемпе специалиссен ӑмӑртӑвӗ

Харьковри Орджоникидзе йачӗпе тӑракан трактӑр савӑтӗнчи ҫамрӑк стахановецсемпе специалиссем ҫӗршыври мӗнпур комсомолецсене совет ҫарӗсӗсем патне чӗнӳ йанӑ, вӗсем хӑйсен ҫырӑвӗнче ленинла-сталинла комсомол 20 ҫул тултарнӑ йатпа пынӑ ӑмӑртура тунӑ ҫитӗнӳсене ҫирӗплетсе хӑвармалла тата ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тума чӗнеҫҫӗ.

Государствӑн Мускаври Л. М. Каганович йачӗпе тӑракан пӗррелӗш подшипник савӑчӗн цехӗсенче ҫамрӑксен пысӑк пухӑвӗсем пулса иртнӗ, вӑл пухусене ҫамрӑк стахановецсем, мастӑрсемпе специалиссем Харьковри ҫамрӑк стахановецсемпе специалиссен чӗнӳне ответлесе 4-мӗш кварталӑ планне тата ҫулталӑк планне срукчен тултарма хӑйсем ҫине обйазательствӑсем илнӗ.

Инструмент цехӗнчи мастӑр—комсомолец Беликӑв йултӑш йертсе пыракан комсомолецсен ҫамрӑксен смени тӑван ҫӗршыв-анлемӗр валҫи тивӗҫлӗ парнесем хатӗрлет. Сменӑри 12 ҫамрӑк производственник — пурте стахановецсем. Вӗсем кулленхи нормӑна икӗ хутран кайа мар тултарса ӗҫлеҫҫӗ. Сменӑ коллективӗ нойабӗрӗн 20-мӗш тӗлне ҫулталӑк планне тултарса, плантан ытлашши 320 пин тенкӗлӗх хаклӑ инструментсем туса кӑларма пулнӑ.

(ТАСС).

Йут ҫӗршывсенчи рабочисен делегацисене Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Советӗнче йышӑнни

Нойабӗрӗн 13-мӗшӗнче, Мускавра, Сойузсен Ҫурчӗн Октябӗр залӗнче, Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн Президиумӗ Октябӗрти Социализмлла Аслӑ Революци XXI ҫул тултарнине уйавлама килнӗ йут ҫӗршывсенчи рабочисен делегацисене йышӑннӑ.

Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн секретарӗ Шверник йултӑш делегацисене Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗ тата совет профсойузӗсен йачӗпе саламланӑ. Шверник йултӑш уйрӑмӑнах ҫӗнӗрен тӗнче вӑрҫи чӗртсе йама тӑрӑшакан фашиссене хирӗҫ кӗрешекен, хӑйсен ирӗклӗхне хӳтӗлекен паттӑр Испани халӑхӗн представителӗсене хӗрӳллӗ салам каланӑ.

Унтан Шверник йултӑш рабочисен делегацийӗсем пана ыйтусене ответленӗ.

— Хасан кӳлли патӗнче пулса иртнӗ йулашки событисем, — тенӗ Шверник йултӑш, — епӗр чи вӑйлӑ ҫӗршыв пулнине, пирӗн совет халӑхӗн пӳҫӗ ҫине хӗҫ ҫӗклеме хӑйакансене пурне те ҫӗмӗрсе тӑкмала ҫапса хуҫма пултаракан Хӗрлӗ Ҫар пурринне пӗтӗм тӗнчене кӑтартрӗҫ.

Совет Сойузӗнчи халӑхсем хӑйсен коммунисла партийӗ, хӑйсен ҫулпуҫӗ Сталин йултӑш тавра пӗтӗҫсе тӑраҫҫӗ. Залра итлесе ларакансем пурте ура ҫине тӑрса Сталин йултӑш йачӗпе алӑ ҫупаҫҫӗ.

Совет Сойузӗнчи ӗҫҫыннисем Ленин — Сталин партийӗ йертсе пынипе пысӑкран та пысӑк правасем—ӗҫлев прави, канӑҫ прави, вӗренӳ прави, ватӑлсан, чирлесен, ӗҫлейми пулсан — пулӑшу прави илнӗ, ҫинчен каланине йут ҫӗршывсенчен килнӗ хӑнасем нумайчен ала ҫупнипе йышӑнса илеҫҫӗ.

Шверник йултӑш уйрӑмӑнах — пирӗн профсойузсем пуринчен те ытларах массӑллӑ организацисем пулнине, вӗсем тӗнчери чи демократиллӗ профсойузсем пулнине палӑртса тӑрать. 1938 ҫулти ийулӗн 1-мӗш тӗлне социализмлӑ ҫӗршывӗнчи профсойузсенче 23,5 миллион ҫын йе пӗтӗм ӗҫлекенсенчен 83,5 процент пӗрлешсе тӑнӑ. Совет профсойузӗсен хайсен ирӗкӗпе ӗҫлекен 5 миллийуна актив пур.

Шверник йултӑш Совет Сойузӗнчи рабочисен ӗҫ укҫи пӗрмайах ӳссе пынине кӑтартнӑ. 1933 ҫулта ӗҫ укҫи фончӗ 34 миллиард тенкӗлӗх пулнӑ, 1938 ҫулта ӗҫ укҫи фончӗ 93,8 миллиард тенке ҫитнӗ.

Йулашкинчен Шверник йултӑш пӗтӗм тӗнчери профсойузсен пӗрлӗхӗ ҫинчен тӑракан ыйтусене чӑтса панӑ.

Иышӑнура Испани делегацийӗн представителӗ Фелипе Претель, ҫавӑн пекех Франци, Англи, Бельги тата Скандинави ҫӗршывӗсенчи делегацисен представителӗсем тухса каланӑ. Испани делегацин представителӗ тухса калани пурте ӑшшӑн кӑмӑлласа йышӑннӑ.

(ТАСС).

Кемаль Ататурка пытарнӑ ҫӗрте пулма уйӑрнӑ совет делегацийӗ

Турци республикӗн вилнӗ президентне—Кемаль Ататурка пытарнӑ ҫӗрте пулма делегаци ҫак составран тунӑ: Йут ҫӗршыв ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн заместителӗ Потемкин йултӑш, Хура тинӗс флот командуйушчийӗ 2-мӗш рангри флагман Йумашӗв йултӑш, Совет Сойузӗн Турцири полпречӗ Терентйӗв йултӑш.

(ТАСС).

Франци правительствин чрезвычайлӑ декречӗсем

Нойабӗрӗн 12-мӗшӗнче Франци правительстви чрезвычайлӑ декретсем чылай кӑларнӑ. Ку декретсем пуринчен те малтан ӗҫҫынни массисен пурнӑҫ условийӗсене вӑйлӑн хӗснине, налогсене ӳстернине, 40 сехетлӗ ӗҫ ернине чӑннипе илсен пӑрахӑҫа кӑларнине пӗлтереҫҫӗ т. ыт. те.

Сведӗнисем тӑрӑх, чрезвычайлӑ декретсемпе ҫаксене тума палӑртса хунӑ: халӑхӑн пӗтӗм дохочӗсем ҫине чрезвычайлӑ йӗркепе икшер процент налог хураҫҫӗ, ӗҫ укҫи ҫине, вырӑнтан куҫман пурлӑхсем ҫине хуракан налогсене, кофе, сахӑр, бензин, табак, ерех хакӗсем ҫине хуракан акцизсене, почтӑпа телефон хакӗсене хӑпартаҫҫӗ, ҫавӑн пекех метрора ларса ҫӳремелли тӳлев хакӗ т. ыт. те хӑпарать.

40 сехетлӗ ӗҫ ерни ҫинчен кӑларнӑ саккун формӑллӑ ҫаплипех йулать. Анчах хальхи йӗрке, ернере 5 кун ӗҫлемене туни улшӑнать. Ун вырӑнне 6 кунлӑ ӗҫ ерни тӑваҫҫӗ, унсӑр пуҫне тата предприйатисене 50 ӗҫ сехечӗ хушса параҫҫӗ, „кирлӗ тӗлсенче“ предприйатисем ӗҫ сехечӗсене татах нумайлатма пултараҫҫӗ.

Хушса панӑ сехетсенче ӗҫлеме килӗшмен рабочисене ӗҫрен кӑларса йараҫҫӗ тата ӗҫсӗр тӑрса йулнисен шучӗпе паракан пособине памала мар тӑваҫҫӗ. Хушса панӑ сехетсене ӗҫлессине хирӗҫ хӗтӗртекен ҫынсене декретсенче судпа айӑплама палӑртса хунӑ.

„Государства расхучӗсене пӗчӗклетес“ тесе чукунҫул рабочийӗсене 40 пин ҫынна ӗҫрен кӑлараҫҫӗ, ҫавӑн пекех общественӑй ӗҫе кайакан укҫа-тенкӗ хисепне те пӗчӗклетеҫҫӗ т. ыт. те.

Сылтӑм тата фашисла ушкӑнсем Даладйе правительствин декречӗсене пӗтӗмӗшпех ырлаҫҫӗ. Реакцилле хаҫатсенчен пӗри—„Епок“ ҫапла ҫырать: ку декретсем „Францире капитализмла режиме сыхласа хӑвармали йулашки шанчӑк“ тет.

Коммунисла хаҫат „Йуманите“, декретсен шухӑшне тӑрӑ шыв ҫине кӑларса, ҫапла ҫырать: правительствӑн ҫак ӗҫӗсем ӗҫхалӑх массисен пурнӑҫ условийӗсене начарлатаҫҫӗ, вӗсем тата „чухӑн ҫыннӑн ҫеҫ пит йавӑр пулаҫҫӗ. Пуйансене илсен, ҫӗнӗ налогсем вӗсене сахал тивеҫҫӗ“.

(ТАСС).

Китайри вӑрҫӑ

Йапонецсем Центр Китайра Тунчена (Хубей провинцин кӑнтӑр пайӗнче) туртса илнӗ хыҫҫӑн, Хунань провинции чиккисем патне пыма пуҫланӑ. Анчах та Китай ҫарӗсем нойабӗрӗн 11-мӗшӗнче Суйелань патӗнчен (Бейлин—Ханькоу чукунҫулӗнчен 65 километр хӗвеланӑҫ йеннеле) хӑваласа йанӑ та, йапонецсем малалла танписа пырассине чарса лартнӑ.

Кӑнтӑр Китайра Китай ҫарӗсем Вейчжоупа Самшуйа туртса илнӗ хыҫҫӑн, Кантон ҫине виҫӗ колоннӑпа ӑнӑҫлӑн танписа пыраҫҫӗ. Китай ҫарӗсем нойабӗрӗн 12-мӗшӗнче Цунхуана йышӑннӑ.

Ҫурҫӗр Китайра Шаньси провинцин ҫурҫӗр пайӗнче—Нин-у районӗнче ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Китай позицисем ҫине йапонецсем тунӑ атакӑсене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

* *
*

Йапони авиацийӗ хальӗ те Китайӑн мирлӗ хулисем ҫине бомбӑсем пӑрахать. Нойабӗрӗн 11-мӗшӗнче Хунань провинцинчи Льуйань ҫине 100 бомба ытла пӑрахнӑ, амӑнса тата вилсе 1000 ҫын ытла пӗтнӗ. Нойабӗрӗн 12-мӗшӗнче Йапони бомбовозӗсем Гуандун провинцинчи Линьсянь ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Мирлӗ халӑха 100 ҫын ытла пӗтернӗ.

(ТАСС).

ПСК(б)П Ҫӗмӗрле райкомӗн пленумӗ

Ҫак кунсенче ПСК(б)П Ҫӗмӗрле райкомӗн 3-мӗш пленумӗ пулса иртрӗ. Пленум организацилле ыйту сӳтсе-йавӑрӗ. Партогранизаци ӗҫне йертсе пыма пултарайманшӑн пленум райкомӑн пӗррелӗш секретарӗ Мидаков йултӑша ӗҫрен тата бюро членӗнчен кӑларчӗ. ПСК(б)П райкомӗн пӗррелӗш секретарне Н. Н. Бобров йултӑша виҫҫӗмӗш секретарне Ф. И. Вальнён йултӑша суйларӗ.



ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Хасан кӳлли патӗнче пулӑҫсемпе тата гранатӑ тӗпренчӗкӗсемпе шӑтарнӑ хӗрлӗ йалава командирсем Заозерная высота ҫине хӑпартса лартаҫҫӗ (1938 ҫ. август уйӑхӗ).
В. Темин фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото).

Чехословакири политикӑллӑ шалти лару-тӑру

Хальхи вӑхӑтра Чехословаки общественнӑҫӗ умӗнче тӑракан чи пысӑк ыйтусенчен пӗри—политикӑллӑ партисен малала мӗнле пурӑнас ыйту пулса тӑрать. Йулашки кунсенче Германи фашизмӗ Чехословаки правительствине вӑйлӑн хӗссе пынипе ҫӗршывра фашисла йӗрке туса хурас плана, чӑн малтанах политикӑллӑ партисене салатса йарассине хӑвӑртрах пурнӑҫа кӗртессишӗн тӑрӑшать. Прагӑра „нимӗҫсен парламентла клубӗ“ текенскерне тунӑ, вӑл клуба генлейнӑвеҫ Кунд йертсе пырать. Германи фашизмӗ ҫак „клуб“ урлӑ Чехословакин политикӑллӑ шалти пурнӑҫӗ тата туллашри политикӗ ҫине танписа пырассине пурнӑҫа кӗртме тӑрӗшлелет пулмала.

Германи фашизмӗн агентури—аграрлӑ парти—фашисла Германипе тусла хутшӑнса пурӑнасси йенне татаклӑнах ҫавӑрӑнна, ҫӗршывра пӗр парти туса хума тата корпоративлӑ (урахла каласан, фашисла) организацилӗ государствӑ тума тата ыт. ыйтать.

Ҫак программӑна пурнӑҫа кӗртессине хирӗҫ Чехословаки халӑхӗ пысӑккан тӑрать. Аграрлӑ-фашисла реакци Германи фашизмӗн примерӗ тӑрӑх йеврейсене хирӗҫле ӗҫсем тума хӑтланни пӗтсе ларнӑ. Прагӑра йеврейсене погром тума чӗксен погрома хутшӑнма хатӗррисем буржуалла ҫамрӑксен пӗчӗк ушкӑнӗ—100—150 ҫын кӑна тупӑннӑ. Ҫавнашкал погромла ӗҫ тума чӗнни халӑх хушшинче фашиссене кураймалӑха питӗ вӑйлан ӳстернӗ.

Ҫавӑн пекех, пӗр парти тӑвас программӑна буржуалла партисем йышӑнни палӑрмасть. Чех социалисӗсен ретӗнче сапаланчаклӑх ӳссе пыни палӑрать. Вӑл партине йертсе пыракан панкрута тухнӑ ҫынсем, реакци хӗсние пула, хӑйсен партине пӗтерсе лартса фашисла организацилекен „пӗрлехле партине“ кӗме шухашлаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах ку партин членӗсен массисем пӗрлешессине хирӗҫ тӑраҫҫӗ.

Пӗр парти тӑвас ыйту пирки ытти партисен ӑшӗнче те чылайӑх хирӗҫӳсем пур.

Партисем „хӑйсене хӑйсем салатса йанипе“ фашисла пӗр парти тума сукнине курнӑ хыҫҫӑн, аграрла парти „фашисла йӗркене ҫӳлтен“ туса хурассипе харатма тытӑннӑ. Аграрисен пичечӗ политикӑллӑ партисене пурне те хӗлех салатса пама, „государствӑ партине“ тума, рабочисен пур организацисене те тата халӑх кӗрешне иле демократиллӗ ирӗклӗхсене пӗтерсе лартма хушать.

(ТАСС).

„Ленин“

Владимир Ильич Ленин вилнӗренпе 15 ҫул тулнӑ тӗле Мосфильм студийӗ „Ленин“ йатлӑ историлле-революцилле фильм кӑларма хатӗрленет.

Натурӑллӑ ӳкерчӗксене туса та пӗтернӗ ӗнтӗ. Царицынри ҫапӑҫу тӗп епизочӗсене, Кремль площӗчӗнчи сценӑсене, ӗлӗкхи Михельсон савӑчӗн карттинӗче В. И. Ленина вӗлерме тапаннине т. ыт. те ӳкерсе илнӗ.

Хальхи вӑхӑтра павильонра ӳкермелли сценӑсене тӑваҫҫӗ. Вӗсен хушшинче тӗп вырӑнсенчен пӗрисем ҫаксем пулаҫҫӗ: ӗлӗкхи Михельсон савӑчӗн цехӗнчи митингра Ленин тухса калани, Ленинӑн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗнчи кабинечӗнчи епизодсем, Владимир Ильич Сталин йултӑшпа тӗл пулни (Сталин йултӑш хайӗн учителӗн, Каплан есерка предательле персе амантнӑ Ленинӑн сывлӑхӗ ҫинчен пӗлме фронтран пыни).

В. И. Ленин ролӗнче—ССР Сойузӗн халӑх артисчӗ Щукин.

(ТАСС).

1938 ҫулшӑн государствӑна ҫӗрулми тӑратмали плана мӗнле тултарса пыни

(Нойабӗрӗн 14-мӗшне, процентпа)

1.	Улатӑр	82,2
2.	Елӗк	90,2
3.	Патӑрйел	42,3
4.	Варнар	79,4
5.	Йӗпреҫ	86,0
6.	Ишлей	55,0
7.	Канаш	45,5
8.	Куславкка	47,6
9.	Хӗрлӗ Чутай	32,8
10.	Кувакино	41,3
11.	Сӗнтӗрвӑрри	58,4
12.	Парачкав	48,5
13.	Турхан	55,1
14.	Тутаркас	90,5
15.	Трак	55,8
16.	Вӑрмар	36,2
17.	Ҫӗрпӳ	43,4
18.	Шупашкар	69,8
19.	Шӑмӑршӑ	45,5
20.	Шахасан	75,2
21.	Шӑнкӑртам	79,9
22.	Ҫӗмӗрле	63,1
23.	Йетӗрне	63,0
24.	Йелчӗк	60,9
25.	Тавай	76,1
	Республикӗпе	58,0

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) Партин ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакцилененĕ. **КĔСКЕ КУРС.** ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.

IX СЫПĂК

БОЛЪШЕВИКСЕН ПАРТИЙĔ ХАЛĂХ ХУÇАЛĂХНЕ УРА ÇИНЕ ТĂРАТАС ТĔЛĔШПЕ МИРЛĔН ĔÇЛЕМЕ КУÇНĂ ТАПХĂРТА.

(1921—1925 çулсем).

1. Совет çĕршывĕ интервенципе граждăн вăрçине пĕтерне хыççăн. Хуçалăха ура çине тăратас тапхăрăн йăвăрлăхĕсем.

Вăрçа пĕтерсе, Совет çĕршывĕ хуçалăхăн мирлĕ строительстви çулĕ çине куçа пуçланă. Вăрçа тунă суранcене сиплесе тÿрлетмеле пулнă. Иухăнса çитнĕ халăх хуçалăхне ура çине тăратмала, промышленнăçа, транспарта, йалхуçалăхне йĕркелемеле пулнă.

Анчах та мирлĕ строительствăна куçас ĕçе çав тери йăвăр лару-тăрура туса кутемеле пулнă. [illegible] хушши пынă империалисăмлă вăрçă тата интервенцине хирĕç виçĕ çул вăрçни çĕршыва йухăнтарса хăварнă.

Йалхуçалăхĕн пĕтĕм продукци хисепĕ 1920 çулта вăрçаччен хи висен çурринчен йахăн кăна пулнă. Вăрçаччен хи виçе вĕт вăл патша Российĕнчи çуклăхлă йалăн пурнăç виçи пулнă. Кунсăр пуçне тата 1920 çулта нумай кĕпĕрнесенче тырă пулман. Хресченсен хуçалăхĕсем йăвăр пурнăç тÿснĕ.

Ишĕлсе йухăннă промышленнăçра ĕççем тата та начартарах пулнă. Шултăра промышленнăç продукцийĕ 1920 çулта вăрçăччен хинчен çичĕ хута йахăн сахалтарах пулнă. Хапрăксемпе савăтсем нумайĕшĕ ĕççĕр тăнă, рудниксемпе шахтăсем ишĕлсе пĕтнĕ, вĕсене шыв тулнă. Металлурги уйрăмăнах пысăк йăвăрлăхра пулнă. Пĕтĕм 1921 çул хушшинче 116 3 пин тоннă çеç чугун шăратса кăларнă, урăхла каласан, вăрçăччен чугун туса кăларнă хисепрен 3 процента йахăн шăратса кăларнă. Хутмали йапаласем çитмен. Транспарт ишĕлнĕ пулнă. Çĕршывра пулнă металлпа мануфактура запасĕсем пĕтсе çитнипе перех пулнă. Çĕршывра чи кирлĕ йапаласем: çăкăр, сĕт-çу, аш-какай, ată-пушмак, тумтир, спичкă, тăвар, краççын, супăнь çитмен.

Вăрçă пынă вăхăтра çынсем çав çитменлĕхсене тата вăрçă хатĕрĕсем çитменнине хăнăхса çитнĕ, хăш чухне тата вĕсене асăрхама та пăрахнă. Анчах халĕ, вăрçă пĕтсен, çынсем çав çитменлĕхсене тата йапаласем çитменнине чăгма çуккине сасартăк туйса илнĕ, çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме требовани лартма тытăннă.

Хресченсем хушшинче кăмăлсăрлăх пула пуçланă. Граждăн вăрçин вут-хĕмĕнче рабочи класпа хресченсен хушшинчи вăрçăла-политикăлă сойуз пулса çирĕпленнĕ. Çав сойуз паллă никĕс çинче тытăнса тăнă: хресчен Совет влаçĕнчен çĕр илнĕ, Совет влаçĕ хресченсене помещиксенчен кулаксенчен хÿтелесе тăнă, рабочисем хресченсенчен продразверсткă тăрăх продоволъстви илсе тăнă.

Халĕ ĕнтĕ ку никĕс çителĕксĕр пулса тăнă.

Совет государствин ирĕксĕрех çĕршыв оборони нушисем валъли хресченсенчен продразверсткă йĕркипе унăн мĕнпур ытлашши продукцине илсе тăмала пулнă. Продразверсткăсăр, вăрçăла коммунисăм политикисĕр граждăн вăрçинче çĕнтерме май пулман пулĕччĕ. Вăрçа тата интервенци пирки вăрçăлă коммунисăм политикине ирĕксĕрех туса пымала пулнă. Вăрçă пынă чухне, хресчен продразверсткăна килĕшнĕ, [illegible] помещиксем кайала таврăнас хăрушлăх иртсен, хресчен, унăн мĕнпур ытлашши продукцине илнипе, продразверсткă системипе кăмăлсăр пулнине кăтарта пуçланă, ăна çителĕклĕ тавар парса тăма ыйта пуçланă.

Вăрçăлă коммунисăмăн пĕтĕм системи, Ленин каланă пек, хресченсен интересĕсемпе хирĕççе кайнă.

Кăмăлсăрлăх стихийĕ рабочи класа та пырса перĕннĕ. Пролетариат хăй çинче граждăн вăрçин тĕп йăвăрлăхĕсене тÿссе иртернĕ, вăл белогвардейĕцсемпе интервентсен пысăк çарĕсене хирĕç, йухăнупа выçлăха хирĕç паттăрăн та хăйне шеллемесĕр кĕрешнĕ. Чи лайăх, чи ăнланулă, хăйне шеллемен тата дисциплинăлă рабочисем социалисăмла хавасăх кăварĕпе çуннă. Анчах та хуçалăх пит вăйлăн йухăнни рабочи клас çине те влийани панă. Çаплах ĕçлекен сахал хапрăк-савăтсем те час-часах чарăна-чарăна тăнă. Рабочисен кирĕсĕрех кустарла ĕçлеме, зажигалкăсем тума, мешочничĕствăпа хăтланма тивнĕ. Пролетариат диктатурин класлă никĕсĕ вăйсăрлана пуçланă, рабочи клас сапаланса пынă, рабочисен пĕр пайĕ йала кайнă, рабочи пулма пăрахнă, класлă сăн-сăпатне çухатса пынă. Выçлăха тата ывăнса çитнине пула рабочисен пĕр пайĕ хушшинче кăмăлсăрлăх палăрнă.

Парти умне çĕршывăн хуçалăхлă пурнăçĕн мĕнпур ыйтăвĕсем тĕлĕшпе партин çĕнĕ установкине, çĕнĕ лару-тăрăва килĕшÿлĕ установкăна туса хатĕрлес ыйту тухса тăнă.

Парти вара хуçалăх строительстви тĕлĕшпе çĕнĕ установкă туса хатĕрлеме тытăннă.

Анчах клас тăшманĕ çывăрман. Вăл хуçалăхри йăвăр лару-тăрупа усă курма хăтланнă, хресченсем хушшинчи кăмăлсăрлăхпа усă курма хăтланнă. Çĕпĕрте, Украинăра, Тамбов кĕпĕрнинче (антоновщина) белогвардейĕцсемпе есерсем организациленĕ кулаксен пăлхавĕсем сиксе тухнă. Тĕрлĕрен контрреволъуцилĕ елементсен—меньшевиксен, есерсен, анархиссен, белогвардейĕцсен, буржуалă националиссен ĕçĕ чĕрĕлсе кайнă. Совет влаçне хирĕç кĕрешес ĕçре тăшман тактикăлă çĕнĕ меслетсем çине куçнă. Вăл советлă сăрпа сăрланма тытăннă, ĕлĕкхи пăчланнă лозунга: „Советсем тĕп пулччăр" текен лозунга мар, çĕнĕ лозунг: „Советсемшĕн, анчах коммуниссемсĕр Советсемшĕн" текен лозунг кăларса тăратнă.

Кронштадтра пулнă контрреволъуцилĕ пăлхав клас тăшманĕн çĕнĕ тактикине лайăх кăтартса пани пулса тăнă. Çав пăлхав 1921 çулти март уйăхĕнче, [illegible] виксемпе тата йут государства представителĕсемпе çыхăнса тăракан белогвардейĕцсем пулнă. Хăйсем капиталиссемпе помещиксен влаçне тата пурлăхĕсене кайала тавăрма тăрăшнине пăлхавçăсем малтанхи вăхăтра „советлă" вывĕскăпа витсе тăма хăтланнă. Вĕсем „коммуниссемсĕр Советсем" текен лозунг кăларса тăратнă. Советлă пек курăнакан лозунгпа витĕнсе Совет влаçне сирпĕтсе антарас тесе, контрреволъуци вакбуржуалă массăсен кăмăлсăрлăхĕпе усă курма хăтланнă.

Кронштадтри пăлхав пуçланса кайассине икĕ сăлтав çăмăллатнă: вăрçă карапĕсем çинчи матроссен составĕ улшăнса начарланни тата Кронштадтра болъшевиксен организацийĕ вăйсăр пулни. Октябĕр революцине хутшăннă ĕлĕкхи матроссем пурте тенĕ пекех фронта кайнă та Хĕрлĕ çар речĕсенче паттăрăн çапăçнă. Флота çĕнĕ çынсем, революцире пиçĕхмен çынсем пынă. Çав çынсем политикă тĕлĕшпе питех те кайра тăракан хресченле массă пулнă, вĕсем хресченсем продразверсткăпа кăмăлсăр пулнине палăртса тăнă. Кронштадтри болъшевиксен çав вăхăтри организацине илсен вара, фронта темиçе хут мобилизацисем туса иртернĕ пирки вăл питĕ те вăйсăрланса йулнă. Çавнашкал пулни есер-меньшевиксене тата белогвардейĕцсене Кронштадта кĕрсе кайса, ăна çавăрса илме май панă.

Пăлхавçăсем чи лайăх крепăçе, флота, питĕ нумай вăрçă хатĕрĕсем тата снарйадсем йарса илнĕ. Пĕтĕм тĕнчери контрреволъуци çĕнтерÿ уйавĕ тунă. Анчах тăшмансем ытла та ир савăннă. Совет çарĕсем пăлхава хăвăрт пусарнă. Кронштадтри пăлхавçăсене хирĕç парти хăйĕн чи лайăх ывăлĕсене—партин Х-мĕш сийесĕн делегачĕсене йанă, делегатсене Ворошилăв йулташ йертсе пынă. Кронштадт çине красноармейĕцсем çÿхе пăр тăрăх пынă. Пăр чăтаймасăр çĕмĕрленĕ пирки нумайĕшĕ шыва путнă. Кронштадтăн пырса тĕкĕнме çук тенĕ пекех çирĕп форчĕсене штурмлама кайма пулнă. Революцине чĕререн парăнни тата хăйулăхпа паттăрлăх, пĕтĕм пурнăçа Совет влаçĕшĕн пама хатĕр тăни çĕнтернĕ. Кронштадт крепăçне хĕрлĕ войскăсем тапăнса çĕнсе илнĕ. Кронштадтри пăлхава пĕтерсе хунă.

2. Партире профсойузсем çинчен пынă дискуççи. Партин Х-мĕш сийесĕ. Оппозици парăнни. Економикăн çĕнĕ политики (нэп) çине куçни.

Вăрçăна пĕтернĕ тата хуçалăхăн мирлĕ строительстви çине куçнă хыççăн, вăрçăпа блокадă лару-тăрăвĕ туса хунă вăрçăлă коммунисăмăн хытă режимне сыхласа хăварма текех сăлтав çукки партин Тĕп Комитечĕшĕн, унăн ленинла нумайтарах пайĕшĕн паллă пулнă.

Продразверсткă текех кирлĕ мар пулнине, хресченсене хăйсен производствинчи ытлашши продукцин пысăк пайĕпе хăйсене кирлĕ пек усă курма май парас тесе продразверсткă вырăнне продналог тума кирлине Тĕпком ăнланса тăнă. Тĕпком çакна ăнланса тăнă: çакăн пек мерă йалхуçалăхне чĕртсе йама, промышленнăçа аталантарма кирлĕ тĕштырăпа техникăлă кулъ турăсен производствине сарма, çĕршывра тавар çаврăнăшне чĕртсе йама, хуласен снабженине лайăхлатма, рабочисемпе хресченсен сойузĕн çĕнĕ, хуçалăхлă никĕсне тума май панă пулĕччĕ.

Тĕпком çавăн пекех тата промышленнăçа чĕртсе йарасси чи пирвайхи задачă пулса тăнине те лайăх пĕлсе тăнă, анчах та вăл çапла шутланă: промышленнăçа чĕртес ĕçе рабочи класа тата унăн профсойузĕсене хутшăнтармасăр çав ĕçе тума çук, хуçалăх йухăнни вăл интервенципе блокадă пекех халăхăн хăрушă тăшманĕ пулса тăнине рабочисене каласа ăнлантарсан, вĕсене çав ĕçе хутшăнтарма пулаť, партипе профсойузсем рабочи клас тĕлĕшпе фронтра пулнă пек çар приказĕсемпе мар, — фронтра чăнах та приказсем кирлĕ, — ăнлантарса ĕнентернипе, ăнлантарса ĕнентерес метăдпа вĕсем çав ĕçе пурпĕрех тума пултараççĕ.

Анчах партин пур членĕсем те мар Тĕпком пек шухăшланă. Оппозицилĕ группкăсем — троцкиссем, „рабочи оппозици", „сулахай коммуниссем", „демократилĕ централиссем" тата ыт. те — сапаланчăклăхра пулнă тата хуçалăхăн мирлĕ сторительствине куçас ĕçĕн йăвăрлăхĕсем умĕнче иккĕленсе тăнă. Партире меньшевиксем пулнисем, есерсем пулнисем, бундовĕцсем пулнисем, боротбиссем пулнисем тата Российă окраинисенчи тĕрлĕ çурмаиационалиссем сахал мар пулнă. Вĕсем пуринчен ытла куйе тепĕр оппозицилĕ группкăсем çумне хутшăннă. Вĕсем чăн-чăн марксиссем пулман, економикăлă аталанăвăн саккунĕсене пĕлмен, партилле-ленинла пиçĕхмен, çавăнпа та çав етемсем оппозацилĕ группкăсен сапаланчăклăхне тата иккĕленнине вăйлатнă кăна. Вĕсенчен пĕрисем шутланă: вăрçăлă коммунисăмăн хытă режимне çемçетмеле мар, пĕтĕмпех урăхла, — „гайкăсене шаларах пăрса кĕртмеле", тенĕ. Теприсем шухăшланă: халăх хуçалăхне ура çине тăратас ĕçрен партипе государствăн айаккала пăрăнса тăмала, вăл ĕçе пĕтĕмпех профсойузсен аллине памала, тенĕ.

Çакăн пек сапаланчăклăх пур вăхăтра парти членĕсен хăшпĕр сийĕсем хушшинче дискуççине йуратакан етемсем, оппортунисла тĕрлĕ „лидĕрсем" тупăнасси, вĕсем партине дискуççи тума вăйпах çыхăнтарасси паллă пулнă.

Вăл çапла пулса тухнă та.

Профсойузсен ыйтăвĕ ун чухне парти политикин тĕп ыйтăвĕ пулман пулсан та, дискуççи профсойузсен ролĕ çинчен тăракан ыйтуран пуçланнă.

Дискуççине чи малтан тапратса йаракан тата Ленина хирĕç, Тĕпкомăн Ленин майлă тăракан ытларах пайне хирĕç кĕрешÿ тапратса йараканĕ Троцкий пулнă. Ĕççене йăвăрлатас тесе, вăл 1920 çулти нойабĕрĕн пуçламăшĕнче профсойузсен Пĕтĕм Российăри V конференцине килнĕ коммунис-делегатсен заседанийĕнче „гайкăсене шаларах пăрса кĕртмеле" тата „профсойузсене тепĕр хут силлесе илмеле" текен шанма çук лозунгпа тухса каланă. Троцкий халех „профсойузсене государствăлантармала" текен требовани кăларса тăратнă. Вăл рабочисен массисене ăнлантарса ĕнентерес метăда хирĕç пулнă. Вăл вăрçă матăчĕсене профсойузсен хушшине куçарассишĕн тăнă. Троцкий профсойузсенче демократине сарассине хирĕç, профсойуз органĕсене суйласа партас-... [illegible] раннĕ,—унсăрăн рабочисен организацийĕсем ĕçлеме пултараймасçĕ,—троцкиссем пĕр ирĕксĕрлес метăд çеç, пĕр командăлас метăд çеç сĕннĕ. Профсойуз ĕçĕсене йертсе пырас вырăна кĕрсе ларма пултарнă çĕрте, троцкиссем хăйсен политикипе профсойузсенче хирĕçÿ кăларнă, раскол тунă, ĕçе ишĕлтерсе пынă. Троцкиссем хăйсен политикипе партире тăман рабочисен массине партине хирĕç тăратнă, рабочи класа сапалантарнă.

Профсойузсем çинчен пынă дискуççи, чăннипе илсен, профсойузсен ыйтăвĕнчен нумай ытларах вырăн йышăнса тăнă. Кайарахпа, РК(б)П Тĕпком пленумĕн (1925 çулти йанварĕн 17-мĕш) резолъуцинче кăтартнă пек чăннипе илсен тавлашу „вăрçăлă коммунисăма хирĕç çĕкленекен хресченсем çине мĕнле пăхасси çинчен, партире тăман рабочисем çине мĕнле пăхасси çинчен пĕтĕмĕшпе илсен, граждăн вăрçи пĕтсе пынă тапхăрта парти массă çине мĕнле пăхасси çинчен пынă" (ВКП(б) в резолюциях, ч. 1, стр. 651).

Троцкий хыççăн партине хирĕçле ытти группăсем те тухнă: „рабочи оппозици" (Шляпникăв, Медведĕв, Коллонтай тата ыттисем те), „демократилĕ централиссем" (Сапронăв, Дробнис, Богуславский, Осинский, В. Смирнов тата ыттисем те), „сулахай коммуниссем" (Бухарин, Преображенский).

„Рабочи оппозици" пĕтĕм халăх хуçалăхне тытса пырас ĕçе „производителсен пĕтĕм Российăри сийесĕн" аллине памала тенĕ лозунга кăларса тăратнă. Вăл парти ролъне пĕтĕмпех пĕтерсе лартнă, хуçалăх строительствинче пролетариат диктатури нимĕнле вырăн та йышăнса тăмала мар, тенĕ. „Рабочи оппозици" профсойузсене Совет государствине хирĕç тата коммуниссен партине хирĕç тăратнă. Рабочи клас организацин чи аслă форми вăл парти мар, профсойузсем пулса тăраççĕ, тенĕ вăл. „Рабочи оппозици", чăннипе илсен, анархо-синдикалисла, партине хирĕçле группă пулнă.

„Демократилĕ централисăм" группи (дециссем) фракцисемпе группировкăсем тума тулли ирĕк пама ыйтнă. Дециссем, троцкиссем пекех, партин Советсенчи тата профсойузсенчи йертсе пырас ролъне ишĕлтерме тăрăшнă. Дециссен фракцине Ленин: „мĕн пур карма-çăварсенчен те хытăрах йанăракансен" фракцийĕ тенĕ, дециссен платформине вара — есерла-меньшевикла платформă, тенĕ.

Ленина хирĕç тата партине хирĕç кĕрешес ĕçре Троцкине Бухарин пулăшнă. Бухарин Преображенскипе, Серебрйаковпа, Сокольникăвпа пĕрле „буферлă" группă тунă. Çав группă чи хăйар фракционерсене—троцкиссене хÿтлесе витсе тăнă. Бухарин хăйне хăй тыткалани çинчен Ленин çапла каланă: вăл „идейĕ тĕлĕшĕнчен ишĕлсе сапаланнин чи вĕçĕ" пулаť, тенĕ. Часах бухаринĕцсем Ленина хирĕç кĕрешме троцкиссемпе уççăнах пĕрлешнĕ.

Ленинпа ленинĕцсем хăйсен тĕп кĕрешÿне партине хирĕçле группировкăсен тĕп вăйĕ пулса тăракан троцкиссене хирĕç йанă. Троцкиссем профсойузсене вăрçă организацийĕсемпе пăтраштарнине вĕсем тăрă шыв çине кăларнă, троцкиссене вăрçă организацийĕсен метăчĕсене профсойузсен ĕçне куçарма йурамасť, тесе кăтартса панă. Оппозицилĕ группăсен платформине хирĕç Ленинпа ленинĕцсем хăйсен платформине тунă. Çав платформăра çапла кăтартса панă: профсойузсем вĕсем—управлени шкулĕ, хуçалăха тытса пыма вĕрентекен шкул, коммунисăм шкулĕ пулса тăраççĕ. Профсойузсем хăйсен пĕтĕм ĕçне ăнлантару метăчĕ тăрăх туса пымала. Çапла тусан кăна профсойузсем мĕнпур рабочисене хуçалăх йухăннине хирĕç кĕрешес ĕçе çĕклеме пултарĕç, вĕсене социалисăм строительствине йăвăçтарма пултарĕç.

Оппозицилĕ группировкăсене хирĕç кĕрешес ĕçре парти организацийĕсем Ленин тавра пĕтĕçнĕ. Кĕрешÿ уйрăмăнах Мускаври вăйлăн пулса пынă. Кунта оппозици хăйĕн пур тĕп вăйĕсене те пухса, столицăри организацине хăй аллине çавăрса илме ĕмĕтленнĕ. Анчах та фракционерсем çавăн пек хăтланнине хирĕç Мускав болъшевикĕсем çирĕп отпор панă. Партин Украинăри организацийĕсенче те вăйлă кĕрешÿ сарăлса кайнă. Ун чухне УК(б)П Тĕпкомĕн çекретарĕ пулнă Молотăв йулташ йертсе пынипе [illegible] партине ленинла партин шанчăклă тĕрекĕ пулса йулнă. Бакура оппозицине Орджоникидзе йулташ йертсе пынипе çĕмĕрсе тăкнă. Вăтам Азире партине хирĕçле группировкăсемпе кĕрешес ĕçре Л. Каганович йулташ йертсе пынă.

Вырăнти мĕнпур тĕп организацисем Ленин платформи çумне пĕрлешнĕ.

1921 çулти мартăн 8-мĕшĕнче партин Х-мĕш сийесĕ уçăлнă. Сийесра ĕç тăвакан сасăпа 694 делегат пулнă, вĕсене партин 732.521 членĕ суйласа йанă. Канашлакан сасăпа 296 делегат пулнă.

Сийес профсойузсем çинчен пынă дискуççи итогне туса, нумай ытларах сасăпа ленинла платформăна ырланă.

Сийеса уçнă чухне Ленин çапла каланă: дискуççи вăл пулмала мар ытлашши капăрлăх пулчĕ, тенĕ. Вăл: тăшмансем парти ăшĕнче кĕрешÿ тума тата коммуниссен партинче раскол тума тĕллев лартнă, тесе кăтартса панă.

Фрацилĕ группировкăсем пурри болъшевиксен партийĕшĕн тата пролетариат диктатуришĕн мĕнле пысăк хăрушлăх пулса тăнине шута илсе, Х-мĕш сийес **парти пĕрлĕхĕн** ыйтăвĕ çине уйрăмăнах тимлĕн çаврăнса пăхнă. Çав ыйтупа Ленин доклад туса панă. Сийес мĕнпур оппозицилĕ группировкăсене сивлесе çапла кăтартса панă: вĕсем „чăннипе илсен, пролетарилĕ революцин клас тăшманĕсене пулăшаççĕ", тенĕ.

Сийес фракцилĕ группăсене пурне те çийĕнчех салатса йама хушнă тата мĕнпур организацисене мĕнле те пулин фракцилĕ выступленисем туни ан пултăр тесе çирĕппĕн асăрхаса тăма хушнă. Çав вăхăтрах сийес постановленине пурнăçа кĕртмесен пĕр сăмахсăрах, çийĕнчех партирен кăлармала тунă. Сийес Тĕпкома: Тĕпком членĕсем дисциплинăна пăсассăн тата фракцийе çĕнĕрен чĕртсен йе çĕнĕрен фракцилĕх тусан, вĕсем тĕлĕшпе парти взысканин пур мерисене те, вĕсене Тĕпкомран тата партирен кăларас таранах, йышăнма полномочи панă.

Çав решенисене пурне те Ленин сĕннĕ тата сийес йышăннă „Парти пĕрлĕхĕ çинчен" йатлă уйрăм резолъуцире çырса хунă.

Çав резолъуцире сийес партин мĕнпур членĕсене Х-мĕш сийес тапхăрĕнчи пек чылай обстойательствăсем çĕршыври вакбуржуалă халăх хушшинче иккĕленĕве вăйлăлантарнă самантра парти пĕрлĕхĕ тата унăн речĕсем пĕтĕçÿлĕ пулни, пролетариат авангарчĕн ирĕкĕпе пĕрлĕхĕ пуринчен ытла кирлине асăрхаттарнă.

„Çав хушăрах,—тесе кăтартса панă резолъуцире,--профсойузсем çинчен пынă пĕтĕм партири дискуççичченех партире фракцилĕхĕн хăшпĕр паллисем палăрчĕç, урăхла каласан, хăйсене ăрасна платформăлă тата хăшпĕр таран хупăнса ларса хăйсен группăлă дисциплинине тума туртăнакан группăсем пула пуçлани курăнчĕ. Ăнланулă рабочисем пурте кирек мĕнле фракцилĕхĕн те сийенлĕхне тата ăна тума ирĕк пама йурăманнине лайăх пĕлсе тăни кирлĕ, вăл (фракцилĕх.—Ред.) пурĕпĕрех пурте кар тăрса ĕçленине вăйсăрлатасси патне илсе пыраť тата правительствă партийĕ çумне сыпçăннă тăшмансем партийе пайлантарса йарассине тарăнлатма тата контрреволъуци ĕçĕшĕн унпа усă курма çĕнĕрен вăйлăнрах хăтланнисем патне илсе пыраť".

Сийес, малала, çав резолъуцире çапла каланă:

„Çирĕппĕн тытса пыракан коммунисла тĕрĕс çулйĕртен мĕнле те пулин пăраннисемпе пролетариат тăшманĕсем усă курни Кронштадтри пăлхав примерĕнчен уйрăмах уççăн курăнчĕ. Унчухне тĕнчери пĕтĕм çĕршывсенчи буржуалă контрреволъуципе белогвардейĕцсем, Российăри пролетариат диктатурине сирпĕтсе антарса пултăр тесе совет стройĕн лозунгĕсене те йышăнма хатĕррине çийĕнчех палăртнă, унчухне есерсем тата пĕтĕм буржуалă контрреволъуци Кронштадтра Совет влаçĕшĕн тăнă пек туса восстани лозунгĕсемпе Российăри Совет правительствине хирĕç кĕрешес ĕçре усă курнă. Çакăн пек фактсем çакна лайăх кăтартаççĕ: белогвардейĕцсем, Российăри пролетарилĕ революцин тĕрекне вăйсăрлатса, ăна сирпĕтсе антарасси пултăр тесе, сăрланса коммуниссем пек тата вĕсенчен те „сулахайрах" пек кăтартма тăрăшаççĕ, [illegible] градра кăларнă меньшевикла листоксем çакна кăтартса параççĕ: Кронштадтри пăлхавçăсене, есерсемпе белогвардейĕцсене чăннипе хĕтĕртсе тата пулăшса пырас тесе, меньшевиксем РКП ăшĕнчи разногласисемпе усă курнă, вĕсем хăйсене сăмахпа пăлхавсене хирĕç пыракан çынсем пек тата Совет влаçĕ майлă тăракан, анчах та кăшт çеç тÿрлетсе урăхлантарнă Совет влаçĕ майлă тăракан çынсем пек кăтартнă".

Резолъуци: парти пропагандин парти пĕрлĕхĕ йенчен тата пролетариат диктатури ăнăçлăхĕн тĕп условийĕ пулса тăракан пролетариат авангарчĕн ирĕкĕн пĕрл хне пурнăçа кĕртесси йенчен илсе фракцилĕхĕн сийенлĕхĕпе хăрушлăхĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса памала, тесе кăтартса панă.

Тепĕр йенчен, тенĕ сийес резолъуцинче, парти пропагандин Совет влаçĕн тăшманĕсен тактикăлă чи çĕнĕ прийомĕсен хăйне уйрăмлăхĕсем çинчен ăнлантарса памала.

„Çав тăшмансем,—тесе кăтартса панă резолъуци,—уççăнах белогвардейĕцла флаглă контрреволъуци шанчăксăррине курса ĕненсе, РКП ăшĕнчи хирĕçÿсемпе усă курса, тулаш йенчен Совет влаçне йышăнма чи çывăхрах тăракан политикăлă группировкăсене влаçа парса, контрреволъуцийе мĕнле майпа та пулин малала йарас тесе халĕ пĕтĕм вăйа хураççĕ". (ВКП(б) в резолюциях, ч. 1, стр. 373—374).

Резолъуци, малала, çапла кăтартса панă: парти пропагандин „çавăн пекех иртнĕ вăхăтра пулнă революцисен опычĕсене палăртмала, унчухне контрреволъуци революцилĕ диктатурăна вăйсăрлатса ăна сирпĕтсе антарас тесе, çапла тунипе контрреволъуци, капиталиссем тата помешчиксем малашне пĕтĕмпех çĕнтерсе илме çул уçса парса, чи революцилĕ парти патне çывăх тăракан вакбуржуалă группировкăсене пулăшса тăнă".

„Парти пĕрлĕхĕ çинчен" резолъуципе тепĕр резолъуци—„Пирĕн партири синдикалисла тата анархисла сулăнчăк çинчен" йатлă резолъуци çывăх пĕтĕççе тăнă, ăна та Ленин сĕннĕ тата сийес йышăннă. Çав резолъуцире Х-мĕш сийес „рабочи оппозици" текен группăна сивленĕ. Сийес, анархо-синдикалисла сулăнчăкăн идейисене пропагандăлакансем коммуниссен партинче тăмала мар тесе, партийе çав сулăнчăка хирĕç татăклăнах кĕрешме чĕннĕ.

Х-мĕш сийес продразверсткăран продналог çине, **економикăн çĕнĕ политики (нэп) çине** куçасси çинчен чи кирлĕ решени йышăннă.

Вăрçăлă коммунисăмран нэп патне тунă çак çаврăнура ленинла политикăн пĕтĕм пысăк аслăлăхĕ тата инçете курни палăрнă.

Сийес решенинче продразверсткă вырăнне продналог туни çинчен каланă. Натуральнăй продоволъстви налогĕ продразверсткăран сахалтарах пулнă. Налог мĕн чухлĕ пуласине çуртыррисене акиччен пичетлесе кăлармала пулнă. Налога тÿлемели срухсене. татăклăн кăтартса панă. Налог тÿленĕ хыççăн йулни пĕтĕмпех хресченĕн хăйĕн аллинче йулнă, ăна çав ытлашши йулнипе суту-илÿ тума ирĕк панă. Суту-илÿ тума ирĕк пани, тенĕ Ленин хăйĕн докладĕнче, малтанхи вăхăтра çĕршывра капиталисăм кăшт чĕрĕлсе кайни патне илсе пырĕ. Уйрăм çынсене суту-илÿ тума тата уйрăм промыш-

(Малали 8-мĕш страницăра).

М А Л А Л И.

лĕнниксене пĕчĕк предприйатисем усма ирĕк памала пулаĭ. Анчах унтан хăрамала мар. Ленин çапла шутланă: тавар çавăрнăшĕн хăшпĕр ирĕклĕхĕ хресчен хуçалăхла интересленессине туса хурĕ, унăн ĕç тухăçлăхне ÿстерĕ тата йалхуçалăхĕ хăвăрт çĕкленесси патне илсе пырĕ, çак никĕс çинче государствă промышлĕннăçĕ ура çине тăрса тата уйрăм капитала хĕссе кăларса пырĕ, вăй тата средствăсем пухса хăватлă индусри—социалисăмăн економикăлă никĕсне тума май пулĕ, унтан вара çĕршывра капиталисăмăн йулашкийĕсене пĕтерме татăклă наступленийе куçма пулĕ.

Вăрçăлă коммунисăм — хулари тата йалти капиталисăмлă елементсен крепăçне штурмпа, тÿрех атакăласа илме тăрăшса пăхни пулнă. Çав наступленире парти, хăйĕн базинчен татăлас хăрушлăха пăхмасăрах, малала инçе чупса кайнă. Халĕ ĕнтĕ Ленин кăшт чакма, хамăрăн тыл патне çывăхараха вăхăтлăха чакма, вара вăй пухса, çĕнĕрен наступлени тумашкăн, крепăçа штурмлассинчен ăна ытларах вăрах вăхăт хушши хупăрласа тăма хушнă.

Троцкиссем тата ытти оппозиционерсем нэп вăл кайала чакни çеç пулаĭ, тесе шутланă. Çавăн пек шутлани вĕсемшĕн усăлă пулнă, мĕншĕн тесен вĕсем капиталисăма кайала таварас çулйĕр тытса пынă. Çавă вăл нэп çинчен пит сийенлĕ, Ленина хирĕçле шухăшлани пулнă. Чăннипе илсен, нэп пуçланнăранпа пĕр çулталăк иртсен, партин XI-мĕш сйесĕнче Ленин: кайала чакасси пĕтрĕ, тенĕ, вăл: „Уйрăм-хуçалăхлă капитал çине наступлени тăвас ĕçе хатĕрленес" текен лозунг кăларса тăратнă (Ленин, т. XXVII, стр. 213).

Оппозиционерсем, начар марксиссем тата боļшевиксен партин политикин ыйтăвĕсенче сĕм тăмсай çынсем пулнăскерсем, нэп тупсăмне те, нэп пуçланнă вăхăтра кайала чакнин характĕрне те ăнланман. Нэп вăл мĕн иккенни çинчен маларах каланăччĕ. Кайала чакнин характĕрне илсен вара, кайала чакни тĕрлĕрен пулаĭ. Партин йе çарăн вĕсене парăнтарнă пирки кайала чакмали самантсем пулаççĕ. Çавăн пек чухне çар йе парти хăйсене сыхласа хăварма тата хăйсен кадрĕсене çĕнĕ çапăçусем ваļļи сыхласа хăварма кайала чакаĭ. Ленин нэп-а ĕçе кĕртнĕ чухне пачах та çавăн пек кайала чакма сĕнмен, мĕншĕн тесен ун чухне парти парăнман тата ăна çĕмĕрсе пăрахман кăна мар пулнă, йăлтах урăхла, вăл хăй граждăн вăрçи вăхăтĕнче интервентсемпе белогвардейĕцсене çĕмĕрсе тăкнă. Анчах çĕнтерÿ туса пыракан парти йе çар, хăйсене ваļļи тылра базă хатĕрлемесĕр, наступлени туса пырса малала ытла та инçе чупса кайнă самантсем те пулаççĕ. Ку вăл пысăк хăрушлăх туса хураĭ. Çавăн пек чухне опытлă парти йе çар, хăйĕн базинчен татăлса кайас мар тесе, йалан пекех, кăшт кайала, хăйĕн бази патнеле чакма кирлĕ тесе шутлаĭ, çакна вăл хăйĕн тылри базипе çирĕпрех сыхăнас тесе, мĕн кирлине пурне те хатĕрлесе, унтан вара çĕнĕрен наступлени тума шанчăкларах та çĕнтерÿ ăнаçлăн пулмали наступленийе кайас тесе тăваĭ. Шăпах çакăн йеверлĕ вăхăтлăха чакса пырас ĕçе туса пынă та ĕнтĕ Ленин нэп вăхăтĕнче. Неп-а мĕншĕн тунин сăлтавĕсем çинчен Коминтернăн IV конгресне каласа парса Ленин çапла каланă: „епĕр хамăрăн економикăлă наступленинче ытла пит мала кайрăмăр, епĕр хамăра ваļļи çителĕклĕ базă хатĕрлеймерĕмĕр", çавăнпа та базă хатĕрленĕ тыл патне вăхăтлăха чакни кирлĕ, тенĕ.

Оппозици инкекĕ çакăнта пулнă: вăл хăйĕн тăмсайлăхне пула нэп вăхăтĕнчи кайала чакнин çав уйрăмлăхне ăнланман, хăйĕн пурнăçĕ пĕтичченех те çавна ăнланса илеймен.

X-мĕш сйес нэп çинчен йышăннă решени социалисăм строителстви ваļļи рабочи класпа хресченсем хушшинче çирĕп економикăлă сойуз пулмала туса хунă.

Сйесăн тепĕр решенийĕ те—наци ыйтăвĕ çинчен йышăннă решени çав тĕп задачăшăн кирлĕ пулнă. Наци ыйтăвĕ çинчен Сталин йулташ доклад тунă. Епĕр нацилĕ пусмăрлăха пĕтертĕмĕр, тенĕ Сталин йулташ, анчах ку çителĕклĕ мар-ха. Задачă ĕлĕкхинчен йулнă йавăр наследине—иртнĕ вăхăтра пусмăр тÿссе пурăннă халăхсем хуçалăх, политикă тата куļтура тĕлĕшĕнчен кайа йулнине пĕтерессинче пулаĭ. Çав тĕлĕшпе вĕсене центрти Российăна хăваласа çитме пулăшмала.

Сталин йулташ, малала, наци ыйтăвĕнче партийе хирĕçле икĕ сулăнчăк: великодержавнăй (великоруссен) шовинисăмĕ тата выранти националисăм пурри çинчен кăтартса панă. Сйес икĕ сулăнчăкне те, коммунисăмшăн тата пролетарилĕ интернационалисăмшăн сийенлĕ тата хăрушă пулса тăраççĕ тесе, сивленĕ. Çавăнпа пĕрлех сйес тĕп хăрушăлăх пулса тăракан великодержавнăй шовинисăма хирĕç, урăхла каласан, патша вăхăтĕнче великорусс шовинисĕсем вырăс мар националļнăçсем çине мĕнле пăхнин йулашкийĕсене хирĕç тĕп вăйпа çапмала тунă.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

Ударниксене премилерĕç

Хăмăшри (Вăрнар р.) „Çамрăк колхозник" колхозра Окăбĕр революци 21 çул тултарнă йатпа колхоз правленийĕ колхоз ĕçĕнче тăрăшса ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсене премисем пачĕ. Тăватă колхозницăна пĕрер сысна çури, колхоз пурлăхне çирĕп сыхлакан хуралçа Ал. Головйова пăру парса премиленĕ.

И. Чирков.

П А Р Т И   П У Р Н Ă Ç Ĕ

„Искра" колхозри (Канаш р.) комсомолĕцсем „Чăваш Коммунĕ" хаçатра пичетленсе пыракан „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" пĕрле пухăнса вуласа пыраççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: комсорг Кошкин йулташ парти историн Кĕске курсне вулаĭ; сулахайран сылтăмала—С. Григорйĕв, К. Кошкин, Д. Захарăв, Ф. Иванова, А. Гордейĕв, М. Матвейĕв тата Н. Гордейĕв комсомолĕцсем.

Г. Костин фото-ÿкерчĕкĕ.

Манăн участкăри ĕçсем

Манăн участкăна 3 пуçламĕш парторганизаци кĕрет. Вĕсенче парти членĕсем 10, кандидатсем 9, сочувствуйушчисем 11 çын. Пуçламĕш организацисемсĕр пуçне пĕччен коммуниссем пур—парти членĕсем 3, кандидатсем 7, сочувствуйушчисем 3 çын.

Отчотпа суйлав пухăвĕсем хыççăн, парторганизацисем планпа ĕçлеме тытăнчĕç. Плансене пуçламĕш парторганизацисен пухăвĕсенче сÿтсе-йаваççĕ. Пухура кашни коммунис планпа паллашаĭ, сĕнÿсем параĭ. Плана пухура çирĕплетни вăл плана пурнăçа кĕртессишĕн кашни коммунисăн ответлăхне хăпартаĭ, ун активлăхне çĕклет.

Парторг кашни коммуниса, унăн пĕлÿлĕхне кура, ĕç параĭ, хушнине мĕнле ĕçе кĕртсе пынине тĕрĕслесе тăраĭ.

Коммуниссен пухăвĕсем уйăхра 2 хут пулса иртеççĕ. Пухура тăракан ыйтусем çинчен коммуниссене 3—4 кун малтан пĕлтерни, кирлĕ материалсем çинчен кăтартса пани пухусене йĕркелĕ хатĕрленсе иртерме пулăшаĭ.

Отчотпа суйлав пухăвĕ иртнĕ хыççăн, Шуркассинчи пуçламĕш парторганизаци партилĕ-политикăлă ĕçе нумай вăйлатрĕ. Коммуниссем те порученисене вăхăтра туса параççĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1937 çулти февраļ-мартри пленумĕн решенисем тата Сталин йулташ доклачĕ партилĕ-политикăлă ĕçе тĕпренех çĕнетме пулăшрĕç. Епĕ парторгсене коммуниссен пухăвне хатĕрленсе иртерме, пухусенче ыйтусене сÿтсе-йавма, пуху протоколĕсене йĕрклеме (тухса каланисене, коммуниссен сĕнĕвĕсене тата пуху йышăнăвĕсене çырса пыма), йышăннă решенисене пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслеме, ĕççыннисем хушшинче партилĕ-политикăлă ĕçсене организацилеме пулăшатăп.

Иртнĕ вăхăтра парторгсемпе хăшпĕр вăхăтра кăна канашлу пулса пынă пулсан, халĕ кашни уйăхрах пĕр хут туса иртеретпĕр. Канашлусенче, партилĕ-политикăлă ыйтусемпе пĕрлех, тĕнчери лару-тăру çинчен те докладсем туса иртеретпăр.

Массăлă-политикăлă агитаци ĕçĕ ĕççыннисене коммунисла воспитани параĭ. Ку ĕçе вăйлатма пуçламĕш парторганизацисенчи агитколлективсем пысăк пулăшу параççĕ. Шуркасси тата Тури Сурăмри пуçламĕш парторганизацисем йĕртсе пыракан агитатăрсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕн тата облаçри XIX-мĕш партконференцин решенийĕсене колхозниксемпе йединоличниксене аван ăнлантарса параççĕ.

Пуçламĕш парторганизаци куллен йĕртсе пынипе „1-мĕш Май" тата Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозсем районра чи малтан тырă пухса кĕчĕç. Патшалăха тырă, çĕрулми тата натурплатă парас плана 100 процентчĕпех тултарчĕç.

Кăçалхи çул Шуркассинчи пуçламĕш парторганизаци парти членĕсен кандидатне 3 çынна, сочувствуйушчине 4 çынна илнĕ.

Тури Сурăм организацийĕ парти членĕсен кандидатне 2 çынна, сочувствуйушчине 5 çынна илнĕ. Ытти организацисенче те партине илес ĕçе вăйлатрĕç. Чуракасси йалĕнче малашне кандидатсен группине организацилеме пулаĭ.

А. Никифăрăв.
ПСК(б)П Шахасан райкомĕн инструктăрĕ.

Йалти çĕнĕ интеллигенци

Авалтанпа пуйансемпе куштансенчен хăраса, шикленсе пурăннă йалсем Окăбĕр революци пулнă хыççăн хăйсен сăн-питне пĕтĕмпех çĕнетсе улăштарчĕç. Йал çĕнелсе улшăннă май, йалти интеллигенци те ÿссе пычĕ. Кăна епĕр темĕнле пĕчĕк йалта та уççăнах курма пултаратпăр.

Ака, Трак районĕнчи Исакăвă йалĕ, ĕлĕк, революци пуличчен, хăйĕн тискерлĕхĕпе пĕтĕм таврари йалсем хушшинче палăрса тăнă. Унта таврари паллă вăрă-хурахсем (Мйаçникоч, Çтепанăв таврашĕсем) пĕтĕм йал-йыша хăйсен куçĕнчен пăхтарса, хăратса, ашкăнса пурăннă. Тепĕр йенчен, Исакăвă йалĕнчи попсем чиркÿ урлă 18 йала тĕн сĕрĕмĕпе минретсе улталанă. Иалта пĕр кивелнĕ шкул çеç пулнă. Унта мĕн пурĕ те 20—25 ача кăна вĕреннĕ. Ачасене вĕрентес ĕçре те тÿрĕ кăмăллă учителсем ĕçлемен, поп таврашĕнчен тухнă етемсем çеç ачасене „вĕрентем" пекки туса пурăннă.

Çапла вара, йалта Окăбĕр революциччен пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнисем 3—4 çынтан ытла та пулман. Вĕсем те пулин малала нимĕнле шкула та вĕренме кайайман. Вăтам шкулсемпе аслă шкулсенче вĕренес пирки сăмах та пулма пултарайман.

Халļхи Исакăвă пĕтĕмпех урăхла. 1930 çултан пуçласа йалта туллимар вăтам шкул ĕçлет. Унта 326 колхозник ачи вĕренет, пĕр сăмахпа каласан, шкул çулне çитнĕ ачасем пĕтĕмĕшпех шкулта вĕренеççĕ. Ĕлĕкхи пĕр учител вырăнне халļ 11 учител ĕçлет, вĕсенчен çуррине йахăн учителсен институтĕнчен вĕренсе тухнисем, ыттисем пĕтĕмпех вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă.

Йалта çултан çулах совет интеллигенцийĕ хутшăнса пыраĭ. Чи активлă колхозниксем йалти тĕрлĕ учреждениссенче (йалсоветĕнче, колхозра, кооперативра, трахпунктра) ĕçлеççĕ, хăйсем хыççăн темиçе çĕршер колхозника куļтурлă ĕçлеме, канма, ăслăлăха вĕренме хăнăхтараççĕ, пулăшаççĕ.

Ĕлĕк шкулта попсем хĕненинчен хăраса вĕренмесĕр тăрса йулнă çынсем, халļ халăх хушшинчи ĕçе активлăн хутшăнса ĕçленине пула, совет интеллигенцин ретне тăма, вĕренÿ ĕçне хастарлăн тытăнма тапратрĕç.

Исакĕвă йалсовет председателĕ И. В. Ваçилйĕв йулташ, ĕлĕк мĕн пурĕ те икĕ çул çеç вĕреннĕскер, Хĕрлĕ Çара кайса килнĕ хыççăн, 5 çул хушши пĕр таталмасăр йалсоветĕнче ĕçлет. Халļ ăна икĕ çул вĕреннĕ çынпа нимĕнле те танлаштарма пулмаĭ. Вăл йалсоветĕнче ĕçленĕ вăхăтра халăх хушшинче активлă ĕçлеме вĕреннисĕр пуçне, хăйĕн пĕлÿне хăпартас тĕлĕшпе те питĕ тăрăшса ĕçлет. Хăй тĕллĕнех Маркс—Енгеļс—Ленин—Сталин произведенийĕсене вуласа ăнланаĭ. Çакна шута илсе, ăна кăçал парти райкомĕ кандидатран парти членне куçарчĕ. Халļхи вăхăтра парти историне вĕренмели кружокра вĕренет, çав вăхăтрах колхоз çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацинче политкружока йĕртсе пыраĭ. Хĕрлĕ Çара кайиччен вăл çырма та, вулама та начар пĕлнĕ. Халļ вăл вырăсла та, чăвашла та лайăх калаçаĭ, тĕрĕсех çыраĭ. „Правда", „Известия", „Красная Чувашия", „Чăваш Коммунĕ" хаçатсене йĕркелĕ вуласа пыраĭ.

Çавăн пекех, йалсовет çекретарĕ М. П. Порфирйĕв йулташ та, ĕлĕк сахал вĕреннĕскер, халļ чăнчăн куļтурлă çын пулса тăчĕ. Кулленхи обчăлă ĕçе хастарлăн хутшăнса ĕçлет. Хăйĕн политикăлă пĕлÿне хăпартма тăрăшаĭ, час-часах уйрăм ыйтусем тăрăх колхозсенче докладсем туса параĭ. „Красная Чувашия", „Чăваш Коммунĕ" хаçатсене çулталăклăхах çырăнса илнĕ, вĕсене пĕр номĕр сиктермесĕр вуласа пыраĭ. Вăл йалсоветĕнче 15 çула йахăн ĕçлет. Йалти вăрă-хурахсене пĕтерес тĕлĕшпе чи активлă ĕçлекенсенчен пĕри пулнă. Халļ парти ретне кĕме хатĕрленет.

— Совет влаçĕ пулман пулсан, епĕ халļ пĕр саспалли палламан етем пулмалаччĕ. Совет влаçĕ çеç, йал хушшинче активлă ĕçлени çеç мана куļтурлă çын пулма пулăшрĕ,—тет вăл.

Кунашкал тĕслĕхсем темĕн чухлех. Пайанхи кун тĕлне, Исакăвă йалĕнче 40 çын государствă учреждениссенче ĕçлеççĕ. Вĕсенчен 15 çын халăха çутта кăларас тĕлĕшпе (тĕрлĕ шкулсенче, вулав çуртĕнче) ĕçлеççĕ, 3 çын кооператив органĕсенче, пуштă ĕçĕнче 2 çын, колхозра (правлени председателĕнче, счедоводра, бригадирсенче, фермă пуçлăхĕсенче) 10 çын, трахпунктра 1 çын, судпа йустици органĕсенче 1 çын т. ыт. çĕрте те питĕ нумай. Тĕрлĕ учреждениссенче ĕçлекенсен шучĕ кашни икĕ кил пуçне пĕр çын ытла тивет.

Мих. Йурйĕв.
Туллимар вăтам шкул директăрĕ.

Пуху лайăх иртрĕ

Тăрмăшри (Иелчĕк районĕ) туллимар вăтам шкул çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацийĕн отчотпа суйлав пухăвĕ питĕ активлă иртрĕ. Пухăва чылай малтан хатĕрлентĕмĕр. Комсомол райкомĕ йанă представител Романăв йулташ суйлавччен 3 — 4 кун малтан пырса комсомол организацийĕн ĕçĕпе тата комсомолĕцсемпе тĕплĕн паллашрĕ, суйлава хатĕрленме пулăшрĕ.

Комсорг Осипăв йулташ отчот туса пачĕ. Вăл хăйĕн отчотĕнче пур ĕçсене те палăртрĕ.

Отчот хыççăн пренире 7 çын тухса каларĕç. Пренире тухса каланисем комсомолĕцсене парти ретне куçарас йенĕпе çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç.

Пуху комсорг ĕçне çителĕклĕ тесе хакларĕ.

Вăрттăн (хуппăн) сасăласа 3 çынран комитет суйларĕç.

М. Ластăчкинă.

Н. БОГОСЛОВСКИЙ

И. С. Тургенĕв

(Çурални 120 çул тултарнă тĕле)

Тургенĕв пирĕн çĕршывра чи йуратнă писателсен шутĕнче тăраĭ. Вăл, вырăс чĕлхин пысăк маçтăрĕ, талантлă художник пулса ăруран ăрăва куçса пыракан паха произведенисем çырса хăварнă. Тургенĕв—„Записки охотника" калавсен, „Рудин", „Дворянское гнездо", „Накануне", „Отцы и дети" романсен автăрĕ—пирĕн нумай нацилĕ çĕршывра питĕ лайăх паларса тăраĭ. Вăл Хĕвеланăç Йевропой литературинче те пысăк йĕр

Çамрăк Тургенĕв искуствăн пур йенĕсене те—поезине, театра, живописе çавăрса илнĕ суйа-романтикăлă йухăмăн тыткăнĕнче пулнă. Белинскипе çывхарнă хыççăн, Тургенĕв литературăра Гогаļăн реалисăмла традицине малала илсе пыракан „натуралă шкулпа" çыхăнаĭ. Унччен Кукоļникпе, Бенедиктăнпа тата романтисăмăн ытти çулпуçĕсемпе пĕр шухăхлă пулса пурăннă çын вĕсен хăйар тăшманĕ пулса тăраĭ.

Тургенĕв нумай пулмаĭ хăйĕн кумирĕсем пулнăскерсене тăрăхласа темĕн чухлĕ статйасем пичетлесе кăлараĭ, вĕсен риторикăлă поетикине хирĕç реалисăмла çырассин принципĕсене, литературăри чалăхлăха, пурне те ăнланмала çырассине, шухăш уçăмлăхне, епохăн ыратса тăракан нушисене çывăх тăрассине кăларса тăратаĭ.

Унăн хăй пурăннă тапхăрти чи çивчĕ, чи хĕрсе çитнĕ ыйтăва—крепăсла права пирки тăракан ыйтăва астивсе çырнă „Записки охотника" йатлă кĕнеки çав тери пысăк ăнăç илнĕ. Ку произведенин обшчĕствăлă ăнланăвне Тургенĕвăн хăйĕн сăмахĕсемех лайăх каласа параççĕ: „Епĕ хама йут пулса тăраканпа пĕр сывлăшпа сывлама, йунашар тăма пултараймарăм... Манăн, инçетрен ун çине витĕмлĕрех тапăнас тесен, хамăн тăшманран уйăрăлса каймала пулчĕ. Манăн куçсенче çав тăшман татăклă сăн-сăпат илчĕ, тахçанах паллă йатне илсе çÿрерĕ: вăл тăшман—крепăсла права пулнă. Хам мĕскере хирĕç вĕçне çитиччен кĕрешме тупа тунă, мĕскерпе нихçан та килĕшмеле мар хирĕçетĕп,—çавсене пурне те çав йат айне пухса, ăна хирĕç кĕрешме вăй-хăват пухрăм..."

Йут çĕршывран таврăнсан, 1850 çулта Тургенĕв „Записки охотника" çинче татах нумай ĕçлет, 1852 çулăн пуçламĕшĕнче ку çерине кĕрекен пĕтĕм калавĕсене пухса уйрăм кĕнеке туса кăларма параĭ. Анчах Гогаļ вилни çинчен çырнă статйишăн Тургенĕва часах тытса арĕслесе хăй çуралнă тăван çĕршывне—Спасское салине, административлă ссылкăра пурăнма ăсатаççĕ. Ахаļтен каласан, Гогаļ çинчен çырнă статйа пирки кăна арĕслемен, Тургенĕва арĕслессин тĕп сăлтавĕ унăн творчĕстви пулса тăнă.

„Записки охотника" уйрăм кăларăмпа тухиччĕнех ценвурă ведомствин секретлă докуменчĕсенче çав кĕнекери нумай калавсем „помешчиксене хирĕçле" пулни çинчен каланă. Çав кĕнекене кăларма ирĕк панă Ļвов цензăра „хăйĕн ĕçне тирпейсĕр тунăшăн" пĕрремĕш Микулай приказĕ тăрăх отставкăна кăларнă. Тургенĕвăн кĕнеки литературсен хушшинче кăна мар, вулакансен хушшинче те пысăк ăнăç илнĕ. Художĕствă тĕлĕшĕнчен питех те çÿлĕ вырăнта тăракан, *поезипе, тăван çĕршыва тата халăха йуратнипе* тулнă çав миниаĭурсенче помешчиксен пусмăрĕ хресченсене мĕнле хĕстерсе пурăннине тата халăхра етемле туйăм нумайййине уççăн çырса кăтартнă.

Тургенĕв ссылкăра 1853 çулти декабĕр уйăхĕччен пурăннă. Сакăн хыççăн кивĕ çыру мелĕнчен уйăрăлма тăрăшаĭ, вакă калавсенчен пысăк произведенисем çине куçаĭ.

Малтанхи „Два поколения" йатлă романĕ ăнăçлă пулмаĭ, ăна писател вĕçлесе те çитермест. Анчах писател вулакансем умне „Рудин" (1856), „Дворянское гнездо" (1859), „Накануне" (1860), „Отцы и дети" (1862) т. ыт. романсемпе тухас вăхăт çывхарнă.

Тургенĕв романĕсем пурнăçпа тачă çыхăннипе, пурне те интереслентерекен темăпа çырăннипе, обшчĕстăри çĕнĕ çынсен типĕсене сăнласа панипе паллă пулса тăраççĕ. Доброļубăв ахаļтен мар ĕнтĕ Тургенĕв çинчен çапла çырнă:

„Вăл обшчĕствăлă ăнланăва кĕрсе пыракан çĕнĕ ыйтусене, çĕнĕ шухăшсене час тавçăрса илнĕ, хăйĕн произведенийĕсенче час-часах черетре тăракан, обшчĕствăна хумхантарма тытăнакан ыйту çине çавăрнса пăхнă". Çавăнпа та унăн кашни романĕ тухнă хыççăнах хĕрÿлĕ тавлашусем пуçланнă.

Тургенĕв „Рудин" романран пуçласа „Новь" произведени патне çитиччĕнех Российăн обшчĕствăлă пурнăçĕнчи татăклă улшăнусене сăнласа пынă. Хăйĕн малтанхи икĕ романĕнче вăл Рудинпа Лаврецкий урлă дворйансен сийĕнчен тухнă *„ытлашши çынсене" сăнласа панă пулсан,* „Накануне" тата „Отцы и дети" романсенче вăл вырăс литературинче пуçласа çĕнĕ çынсен типĕсене—хăйĕн тăван Болгарине ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен Инсарăвăн тата дворйансен геройĕсене улăштарма килнĕ разночинĕц-революционер Базарăв сăнлăхне кăтартса панă.

Тургенĕв çырнă романсенчен „Накануне", „Отцы и дети" романсем пушшех те ытларах шав тунă. Çĕнĕ герой тухассине чăтăмсăррăн кĕтсе пурăннă малта пыракан критикă Инсарăв урлă вырăс революционерĕн тĕп сăн-сăпатне курнă. Роман шухăшне тĕплĕн тишкĕрнĕ май, Доброļубăв тÿррех литературăна „вырăс Инсарăвĕн" сăнлăхĕ килесси çинчен каланă, реакцилĕ критикă „Накануне" романа тискеррĕн туллашнипе кĕтсе илнĕ.

„Отцы и дети" роман пирки тухнă тăвăллă тавлашу вунă çул хушши пынă. Демократилĕ критикă романра „нигилиссен" çамрăк ăрăвне тăрăхланине туйнă. Реакцилĕ публицист Катков: Тургенĕв разночинĕц-радикал умĕнче йалав тайаĭ, тенĕ.

Тургенĕв „Современник" тавра, Доброļубăвпа Чернышевский таврра пухăннă демократилĕ лагĕртен уйăрăлса кайни писателĕн произведенийĕсенче те палăрнă. „Современник" журналран уйăрăлнă хыççăн çырнă „Дым" тата „Новь" романсем демократин революцилĕ идейĕсене хирĕç тăраççĕ. Вĕсен художĕствă та çÿлĕ мар. Тургенĕв хăй те йулашки романне тĕплĕнсе çитмен произведени вырăнне шутланă. Роман ăнăçлă пулманнин сăлтавне писател хăй Российăран татăлса пурăннипе ăнлантарма тăрăшнă.

Тургенĕвăн лайăх произведенийĕсем пурнăçпа тачă çыхăнса тăраççĕ. Унăн черновикĕсемпе планĕсем писателĕн романĕсемпе повĕçĕсенче пурнăç художĕствăлă фантазипе мĕнле пĕтĕçсе кайнине уççăн каласа параççĕ. Пурнăçра хăй курса пухнă материала творчĕствăлă тасату витĕр кăларнă, кирлĕ мар материалсене кăларса пăрахнă, пĕрлĕхлĕ сăнлăх тума кирлисене хушнă. Çапла йерипен художĕствăлă произведени пулса пынă. Чĕрĕ материал çинче ĕçленĕ чухне Тургенĕвăн пысăк маçтăрлăхĕ лайăх палăраĭ. Вăл тарçă пек хăйĕн прототипĕсем хыççăн çÿремест, уйрăм елементсенчен уççăн та хăйулăн çĕнĕ сăнлăх туса кăлараĭ.

Тургенĕв тĕнче литературинчи лайăх чĕлхе маçтăрĕсенчен пĕри пулса тăраĭ. Ленин Тургенĕвăн чĕлхине мĕнле пысăк хака хуни пире паллă. „Тургенĕвăн, Толстойăн, Доброļубăвăн, Чернышевскин чĕлхи вăйлă та хăватлă",— тесе çырнă Ленин.

„Литературă техникине тата чĕлхене Толстойран, Гогаļран, Лесковран, Тургенĕвран вĕренме кирлĕ",—тенĕ М. Горький.

Чĕлхе пуйанлăхĕ халăх сăмахлăхĕн чĕрĕ çăлкуçĕнче пулса тăнине Тургенĕв лайăх пĕлсе тăнă. „Хорьпа калаçса,—тенĕ вăл „Записки охотника" кĕнекинче,—епĕ пĕрремĕш хут вырăс мужикĕн çăмăл та ăслă сăмахне илтрĕм".

Тургенĕв, хăйĕн тивĕçĕ çинчен пит калаçма йуратманскер, хăй вырăс сăмахлăхĕн тасалăхне туйса илнине тата ăна йуратса сыхланине палăртса хăварнă. Вăл, тăван çĕршыври критикă ăна тĕрлĕрен айăпланă пулсан та, *„чĕлхе таса марришĕн, чĕлхе тĕрĕс марришĕн, йут сăмак тăрăк çырнишĕн"* айăпламанни ăна савăнтарнă. Тургенĕвăн чĕлхи чăнахах та çепĕç тата хăйĕн пахалăхĕпе илемлĕ. Кирек те мĕнле риторикăна та, чĕлхен пурнăçри пуйанлăхне, йаланхи илемлĕхне, тарăнлăхне тата хăватне чакаракан мĕслетсем уншăн йут пулнă.

1856 çул хыççăн чылай вăхăт йут çĕршывра пурăнса, Тургенĕв вырăс писателĕсен произведенийĕсене Хĕвеланăç Йевропари чĕлхĕсем çине куçарас тĕлĕшпе нумай ĕçленĕ. Вăл тăрăшнипе Пушкинăн, Гогаļăн, Крыловăн, Лермăнтăвăн, Толстойăн, Писемскин, Салтыков-Шчедринăн тата ыттисен произведенийĕсене француз, аглиļчан тата нимĕç чĕлхисем çине куçарнă. Тепĕр йенчен вăл Флобĕр, Золļа, Мапассан произведенийĕсене вырăс журналĕсенче пичетлеме тăрăшнă.

Франци реалисĕсене (Флобĕр, Золļа, Доде, Гопуры тата Мапассан) Тургенĕв нумай пулăшнă. Мопассан хăйне тÿррех Тургенĕвăн ученикĕ вырăнне шутланă. Хĕвеланăçри писателсен хушшинче чăнлăх пуçламĕшне, чĕлхе кал-калăхне, етемлĕх туйăмне илсе пынă.

Шкулсенче физкуљтурăпа йурă ĕçне лайăх вĕрентмеле

Совет шкулĕнче физкуљтурă ĕçĕ питĕ пысăк выран йышăнса тăрат̌. Çамрăк ăрăва таса сывлăхлă, çирĕп нервăлă, ĕç çине социалисăмла пăхма тата тăван çĕршыва çивĕччĕн сыхлама вĕрентсе çитĕнтермеле.

Çакăнпа пĕрлех шкулсенче йурă ĕçĕ те хисеплĕ выранта пулмала.

Анчах чылай шкулсенче физкуљтурăпа йурă ĕçĕсене çителĕклĕ хакламаççĕ. Час-часах çак уроксем нимле тĕллевсĕр иртеççĕ, йе тата физкуљтурăпа йурă урокĕсем выранне чылай чух урăх уроксем пулаççĕ. Калас пулат̌, кун пек туни сийенлĕ йапала.

Çакăн пек çитменлĕхсем, пуринчен ытла, ку ĕçсене тума учитĕлсем хăйсем çителĕклĕ таран хатĕрленменнинчен, çутĕç органĕсем ку ĕçсене хакламаннинчен килеççĕ. Шкулсене инспектăрсем пырсан, нихăçан та физкуљтурă тата йурă ĕçĕсем мĕнле пынипе интересленмеççĕ, ку ыйтăва ниçта та нихăçан та хускатма тăрăшмаççĕ.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕ ку вăхăта çитсе те шкулсем ваљљи йурă ĕçне вĕрентмели татăклă программă хатĕрлемен. Физкуљтурăпа йурă ĕçне вĕрентме пĕр учебник те, нимĕнле методикăлă пособи те çук. Вĕсен методикине педучилишчăсенче те вĕрентмеççĕ. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ вырăс чĕлхине вĕрентес йенпе курссем туса иртерет. Мĕншĕн-ха çав курссен программине физкуљтурăпа йурă методикине кĕртес мар?

Пирĕн шутпа Çутĕç Халăх Комиссариачĕ вăтам шкулсем çумĕнче, районсенче учитĕлсен канашлăвĕсене пухса, çак çулте асăннă предметсем пирки шкулсенче нумай çул хушши ĕçленĕ пысăк опытлă преподаватĕлсен доклачĕсене итлесе сӳтсе-йавмала. Физкуљтурăпа йурă ĕçне шкулсенче анлă çул уçса памала,

С. Йемељйанăв.

Ĕлĕк районĕнчи Çириккасси шкулĕнче вĕрентекен учитĕл.

Пĕтĕм тĕнчери шахмăт турнирĕ

АМСТЕРДАМ, нойабĕрĕн 13-мĕш. Голландири пысăк мар Гронинген хулинче пĕтĕм тĕнчери шахмăт турнирĕн 4-мĕш турĕ пулса иртнĕ.

Тĕнче чемпионĕ пулнă Хозе Рауљ Капабланкăпа (Куба) Михаил Ботвинник (ССРС) вăййи пурне те интереслентернĕ. Ботвинникпе Капабланкă пĕрне пĕри çĕнтереймен.

Реубен Файн халиччен хи пекех ăнăçлăн выљат̌. Ĕнер вăл тĕнче чемпионĕ пулнă Макс Ейвепе выљанă. Файн Ейвене çĕнтернĕ.

Сало Флор (Чехословаки) тĕнче чемпионĕпе Александр Аљохинпа (Франци) выљанă, вĕсем пĕрнепĕри паранман. Пауљ Кереспа (Естони) Самуил Решевский (Америкă) выљаса пĕтерейм ен. Ку вăййара Кересăн пĕр фигурă ытлашши.

Çапла вара тăвата тур выљанă хыççăн малта гроссмейстр Файн пырат̌, вăл виçĕ очко çурă пухнă.

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăç фронтĕнче Ебро йуханшыв районĕнче те, Сегре йуханшывăн сылтăм йенче те йулашки кунсенче çапăçусем чарăнман. Пăлхавçăсемпе интервентсем республиканĕçсен позицийĕсем çине темĕн пек тапăнсан та нимĕн те тăвайман. Сегре йуханшывăн сылтăм йенче республиканĕçсем тăшман хĕстерсе тăнине пĕрмайах сирсе пынă çеç мар, тата тăшмана пысăк çухатусем тутарса малала куçнă. Кунта 3 кун хушшинче — нойабĕрĕн 8, 9, 10-мĕшĕсенче — пăлхавçăсене 800 çын ытла тыткăна илнĕ.

Левант фронтĕнче те республиканĕçсем тăшманăн темиçе атакине ăнăçулăн сире-сире йанă.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

* * *

Фашиссен авиацийĕ çент̌абĕрĕн 15-мĕшĕнчен вара чылай самољотсем çухатнă май, йулашки вăхăтра фашиссен самољочĕсен активлăхĕ халиччен хинчен начартарах пулни палăрат̌. Çак вăхăт хушшинче фашиссен пĕтĕмпе 111 самољот пĕтнĕ. Çавăнпа та фашиссен авиацийĕ сывлăшри çапăçусенчен пăрăнат̌. Апла пулсан та, республикă љотчикĕсем йулашки ерне хушшинче тăшман авиацине ирĕксĕрех темиçе хутчен те сывлăшри çапăçăва кăларма пултарнă. Çак çапăçусенче фашиссен 10 самољот пĕтнĕ. Республикă авиацийĕ пурĕ те 2 истребитĕл кăна çухатнă, вĕсен екипажĕ çăлăннă.

(ТАСС).

— О —

Аванспа укçа

Çĕнĕ Ейпеçри (Йелчĕк р.) Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозра аванс шучĕпе кашни ĕçкунĕ пуçне 40-шер пус укçа пачĕç.

Колхозра тăрăшса ĕçлекен К. Дружнин çемйи аванс шучĕпе 350 тенкĕ, С. Књазĕв çемйи 325 тенкĕ, М. Терентйĕв çемйи 270 тенкĕ укçа илчĕç.

Г. Васйлйĕв.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ССРС Верховнăй Совет депутачĕ Биља Мисостишховă — Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕ (Кабардино—Балкар АССР)—хаљхи вăхăтра Наљчик хулинче Аслă коммунисла йалхуçалăх шкулĕнче вĕренет.

Й. Михулинă фото-ӳкерчĕкĕ

(„Пресsклише").

Чăвашсойузăн çĕнĕ çурчĕ (Шупашкар хули).

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Ниме уйаман администратăр

Пурте пĕлетпĕр, Совет Союзĕнче кашни гражданинăн ĕçлев прави пур. Ĕçлев правине Сталинла Конституци гарантилет.

Анчах, çемйере чăлах та пулат̌ тенĕ пек, ниме уйаман, саккуна пăхăнман администратăрсем халĕ те тупăнкалаççĕ-ха. Вĕсем совет граждăнĕсен ĕçлев правине пăсма пăхаççĕ. Чăваш автогужтрест директăрĕ Степанăв çавăн пек чăрсăр администратăрсенчен пĕри.

Вăл, директăр Степанăв, хăйне хирĕç сăмах хушма хăйакан сотрудниксене ĕçрен кăларса йарасси çинчен (трест ĕçне йусаса йарасси çинчен мар!) çывăрма пĕлмесĕр шухăшлат̌ пулмала.

Çапла, автогужтрест бухгалтеринче А. Борков йулташ бухгалтĕр-ревизор пулса ĕçленĕ. Ун çинчен çакна каласа пама пулат̌: вăл, ытти пайтах совет служăшчисем пекех, хăйĕн ĕçне тăрăшса, тӳррĕн туса пыракан çын. Вăл лайăх ĕçленĕшĕн пурĕ 10 хут, çав шутрах автогужтрестра та преми илнĕ. Çакăн пек хавхалантарса пымала та ĕнтĕ тăрăшса ĕçлекене,—тата мĕн кирлĕ-ха? А. Борков пухура Степанăвăн çитменлĕхĕсене, вăл государствă пурлăхне çаратакансене (хăйĕн Çемĕрлери тусĕсене) хӳтленине палăртса тухса каланă. Çакăншăн ĕнтĕ Степанăв А. Борков çине тарăхса кайнă, ăна ĕçрен кăларса ывăтма сăлтав шырама тытăннă:

— Пурпĕрех кăларса сирпĕтетĕп...—тенĕ вăл.

Шыракан тупат̌, тесçĕ. Çавăн пекех, Степанăв та Боркова Канаш хулине, урăх ĕçе куçарма приказ парат̌. Хăйпе калаçса килĕшменрен, паллах ĕнтĕ, Борков Канаша кайма килĕшмест. Акă, сăлтав тупăнчĕ те, вара Степанăв тепĕр приказ кăларат̌: Боркова ĕçрен кăларас...

Унтанпа чылай вăхăт хушши ĕнтĕ А. Борков хăйĕн тивĕçлĕхне шыраса тĕрлĕрен инстанцисем тăрăх çӳрет. Каплах пырсан ĕç халăх судĕнче вĕçленесси: автогужтрестан ирĕксĕрех ĕçлемесĕр пурăннă çынна укçа тӳлемеле пуласси курăнсах тăрат̌. Анчах, ниме уйаман администратăр, ăна-кăна пăхмасăр, вăл хăй курайман çынна, совет саккунĕсене пăссах, ĕçрен кăларса йанишĕн савăнат̌, хватертен те кăларса ывăтас тесе çунса çӳрет.

А. Борков шофĕрсен профсойузĕн Тĕп Комитетне панă зайавленин вĕçĕнче:

— Мана, тĕрĕс мар кăларнă пирки, кайала ĕçе илме, ирĕксĕрех ĕçлемесĕр пурăннă вăхăтшăн ĕç укçи Степанăв ĕçукçинчен илсе тӳлеттерме, Степанăв государствă пурлăхне çаратакансене хӳтлени çинчен халех сӳтсе-йавма ыйтатăп, тесе çырат̌.

Епĕр те ку стат̌йана çав сăмахсемпех вĕçлеме пултаратпăр. Тата çак ыйтăва автогужтрестри пуçламĕш парторганизаци сӳтсе-йавни кирлĕ, тесе шутлатпăр.

Ф. Александрăв.

Улатăрти художниксен картинĕсем

Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тата Окт̌абĕрти социалисăмлă револљуци 21 çул тултарнă йатпа Улатăр хулинче художествăлă выставкă организациленĕ. Ку выставкăна Улатăрти художниксем пурте пекех хутшăннă. Выставкă тăватă пӳлĕм йышăнат̌.

Каменщикăв художникĕн картинĕсенчен „Декабĕрĕн 12-мĕшĕнчи ир", „Депутат Моисейĕвă йулташ производствăра" йатлă картинăсем уйрăмах килĕшӳлĕ.

Çавăн пекех Ворăнăв, Мйасников, Быкăв, Григорйĕв, Иванов тата Руднĕв художниксен ĕçĕсем те пайанхи телейлĕ те савăнăçлă пурнăçа, уншăн ĕçхалăхĕ мĕнле кĕрешнине тата çулпуççен сăнлăхне килĕшӳлĕ çырса кăтартнипе палăрса тăраççĕ.

Сăмахран, Ивановăн „В. Ленин митингра сăмах калани", „Крепков партизанăн вилĕмĕ" картинăсем пуринчен те ытларах кăмăла кайаççĕ. Ворăнăв художникĕн картинĕсем хăйсен тематикипе интереслĕ: „Ленин Хусанти револљуционерсен кружокĕнче", „Пушкин Болдинора" т. ыт. те.

Выставкăра çамрăк художниксен (Илйин, Канов, Иванов, Бинийенкă т. ыт) пултарулăхне те пысăк выран панă.

Куракансем выставкăна пысăк интереспе пăхаççĕ.

А. Çеменăв.

— О —

Хисеплĕ парне

Шупашкарти Макçим Горький йачĕпе тăракан тĕп библиотекă пирĕн красноармейĕçсен чаçне 62 тенкĕлĕх тĕрлĕрен кĕнекесем йарса пачĕ. Вăл кĕнекесем хушшинче „ПСК(б)П историн Кĕске курсĕ", чăваш писатĕлĕсен произведенийĕсем тата „Сунталпа" „Капкăн" журналсем пур.

Ку парне пире, красноармейĕçсене, питĕ хаваслантарчĕ. Ăша кăмăлпа хисеплесе парне йарса паракансене, хамăр тăван çĕршыва чĕререн йуратнă пек, пысăк йуратупа тав тăватпăр.

В. Порченко.

— О —

Тракри радиоузел

Трак районĕче халиччен радиоузĕл пулман. Халĕ Тракра радиоузĕл уçнă, вăл ĕçлеме пуçланă та ĕнтĕ. Трак йалсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксен 200 килне радио кĕртмеле, Окт̌абĕр уйавĕ тĕлне пурĕ 64 киле радио кĕртнĕ.

Колхозниксен килне радио кĕртес ĕç районра халĕ сарăлсах пырат̌, колхозниксенчен нумайăшĕсем хăйсен килне радио кĕртме тăрăшаççĕ.

И. Хатайевский.

— О —

Колхозниксем кино курасшăн

Именкасси—Трак районĕнчи пысăк йалсенчен пĕри. Кунта пурĕ 300 кил ытла. Кунсăр пуçне йалта вăтам шкул, йалсоветĕ, вулав çурчĕ т. ыт. те пур.

Анчах çапла пулин те ку йала иккĕмĕш çул ĕнтĕ пĕр кинокартинă та пыман. Колхозниксем çĕнĕ кинокартинăсем курасшăн. Вĕсем йала кино пыманнишĕн питĕ пăшăрханаççĕ.

Мих. Александрăв.

Перепис умĕн

Пулăшу комиççийĕсем аван ĕçлеççĕ

КАНАШ. Пĕтĕм Сойузри халăх переписне хатĕрленес ĕç районра кулленех вăйланса пырат̌. Пур йалсоветсенче те переписе лайăх иртерес тесе пулăшу комиççийĕсем организациленĕ. ССРС, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем вăхăтĕнче ĕçленĕ агитатăрсем перепис çинчен халăха ăнлантараççĕ. Йанкăљчăпа Йумансар йалсовечĕсенчи агитатăрсем, счотчиксемпе пулăшу комиççи членĕсем колхозниксемпе йединоличниксен пухăвĕсенче ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Пĕтĕм Сойузри халăх переписне иртересси çинчен" йышăннă постановленине тата хаçатсем çинче перепис çинчен çырнă стат̌йасене ăнлантарса панă. Кунта стена хаçачĕсем çинче те перепис ыйтăвĕсене тĕплĕн çутатса пыраççĕ.

Ст. Филиппăв.

— О —

Йапăх хатĕрленеççĕ

Ахмане йалсоветĕнче (Тутаркас р.) переписе хатĕрленесси йапăх пырат̌. Хуçалăх кĕнеки çинчи графасене тĕплĕн çырман, паллă туса пĕтермен. Тереçри Николай Иванов çемйинче пĕтĕмпе 8 çын пурăнат̌. Вăл шутран вĕреннисем 4 çын. Хаљхи вăхăтра пурте килте. Анчах хуçалăх кĕнеки çинче вĕсен çемйи хăшĕ мĕн чухлĕ вĕренни тата хаљхи вăхăтра хăшĕ хăш выранта ĕçлени çинчен паллă туман.

Переписе хатĕрленесси пĕр хуçалăх кĕнекине çырса тухнипех пулмаст̌. Кунсăр пуçне халăха перепис çинчен ăнлантармала. Вулав çурчĕсенче перепис çинчен çырнă хаçатсем, литературăсем вуламала, перепис кĕтесне организацилемеле. Анчах Ахмане йалсоветĕнче ку тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Суйлавсем вăхăтĕнче ĕçленĕ агитатăрсем хăйсен ĕçне маннă.

М. Шарикăв.

— О —

Куçса çӳрекен хĕрлĕ йалав панă

Трак районĕнчи Метикасси йалсовечĕ районри малта пыракан йалсовечĕсенчен пĕри. Ку йалсовечĕ государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене тултарас, укçа-тенкĕ пуçтарас йенĕпе малта пырат̌. Çакна кура, Трак райĕçтăвкомĕ хăйĕн пленумĕнче Метикасси йалсоветне районри куçса çӳрекен хĕрлĕ йалава пачĕ.

Хĕрлĕ йалава илнĕ хыççăн Метикасси йалсовечĕн чаплă пленумĕ пулчĕ. Пленумра пулнисем: куçса çӳрекен хĕрлĕ йалава хамăр ган йамастпăр, малашне татах та лайăхрах ĕçлетпĕр, терĕç.

Дм. Йегорăв.

★—О—★

Çеминарсем

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕ финанс органĕсенче ĕçлекен работниксен квалификацине хăпартас шутпа, районсенчи тата хуласенчи финанс пайĕсенче ĕçлекен контрољор-ревизорсем тата госдоходсен бухгалтĕрĕсем ваљљи 15 кунлă çеминарсем туса иртернĕ. Вăл çеминарсенче пурĕ 40 çын пулнă.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

БИБЛИОГРАФИ

Арифметикă учебникĕсем çинчен

Пуçламĕш шкулсем ваљљи Н. С. Поповă учебникĕсенчен куçарса çырнă арифметикă кĕнекисен*) I-мĕш пайĕпе II-мĕш пайне пăхса тухсан çакна каламала.

Ку кĕнекесен ырă йенĕсем нумай: арифметикă пĕлĕвĕсене системăлă парса пынă, задачăсем ваљљи ачасене çывăх, ăнланмала материал илнĕ, I-мĕш пайĕнче питĕ выранлă картинăсем пур т. ыт. те.

Анчах кунпа пĕрлех ку учебниксенче пысăк çитменлĕхсем те пур.

Кĕнекесенче (I-мĕш пайĕнче те, иккĕмĕшĕнче те) социалисăм строитĕлствин çитĕнĕвĕсем çинчен калакан задачăсем сахалтарах.

Терминологи тĕлĕшпе çакна калас килет.

„Квадрат" сăмаха „квадрат" тесе каласан аван („тăваткăл" выранне).

„5-е 8-па пысăклат" тени питех ăнланмала мар. Кун пек чухне: „5-е 8 хушса пысăклат" тени ăнланмаларах пулат̌.

„45 хисеп 9-тан миçе хут пысăкрах" тес выранне „9-тан 45 миçе хут пысăкрах" тени авантарах пулат̌.

Кĕнекере йăнăш çырнă сăмахсемпе цифрăсем чылайах сиккелесе тухаççĕ:

I-мĕш пайĕнче, 16 страницăра № 12 задачăра „17 тенкĕ" выранне „15 тенкĕ" лартнă.

II-мĕш пайĕнче, 16 страницăра, № 36 задачăра „илес пул—" тесе çырнă („илес пулсан" выранне). II-мĕш пайĕнчех 83 страницăра, № 26 задачăра „Кашни коробкинче миçе перо?" тесе çырнă. Унта: „Кашни коробкинче миçе перо йулнă?" темеле пулнă.

Йапала йачĕсене те икĕ кĕнекере икĕ тĕрлĕ çырнисем пур: пуйăс—поезд, вакун—вагон, килограм—килограмм, çӳлĕк—полкă, т. ыт.

Вырăслипе танлаштарсан, ӳкерчĕксем (картинкăсем) „шупкарах" ӳкнĕ. Вĕсене палăрмаларах ӳкермеле пулнă.

Вырăсларан чăвашла куçарнă çĕрте уйрăмах пысăк çитменлĕхсем пур.

Кĕнекен I-мĕш пайĕнче 5-мĕш страницăри 7-мĕш задачăна „хутран касса кăларнă цифрăсене хуш тата кăлар" тесе куçарнă. Ăна „хутран касса кăларнă цифрăсемпе шутла: хуш, кăлар" тесе куçарнă пулсан, аванрах пулнă пулĕччĕ. Çавăн пекех 6, 7, 8, 9-мĕш страницăсенче те.

10-мĕш страницăри 3-мĕш задачăна „кăтарт: пиллĕкпе пĕрре; тăваттăпа иккĕ; виççĕпе виççĕ; иккĕпе тăваттă; пĕррепе пиллĕк" тесе куçарнă. Ăна çапларах куçармалă пек: „кăтарт: пиллĕкпе пĕррене; тăваттăпа икке; виççĕпе виççе; пиллĕке"; çакăн майлах куçармала пулнă 10-мĕш страницăри 8-мĕш задачăна, 11-мĕшĕнчи—12-мĕш, 12-мĕшĕнчи—16-мĕш задачăсене те.

Куçаракансем чылай задачăсене тӳсме çук йăвăрлатса пăрахнă. 10-мĕш страницăри 4-мĕш задачăна „ултă çаврашка ӳкер: хĕрлине виçĕ çаврашка тата кăваккине виçĕ çаврашка. Ултă çаврашка ӳкер: хĕрлине икĕ çаврашка, кăваккине икĕ çаврашка, тата симĕссине икĕ çаврашка". Ăна, пирĕн шутпа, çапла çеç куçармала пулнă: „Ултă çаврашка ӳкер: хĕрлине виççĕ, кăваккине виççĕ. Ултă çаврашка ӳкер: хĕрлине иккĕ, кăваккине иккĕ тата симĕссине иккĕ". Кĕске те ăнланмала та.

13-мĕш страницăри 21-мĕш задачăра „çаврашка" сăмах выранне „тăваткăл" тесе çырнă. 16-мĕш страницăра „çырмасăр хуш, çырмасăр кăлар" выранне „ăсра хуш, ăсра кăлар" тесе куçарсан, тĕрĕсрех пулĕччĕ.

Ăнланмала мар кăнттам чĕлхепе куçарнă вырансем татах та нумай. „Вĕрене 2 пайа татнă. Пĕр татăкĕ 3 метр, тепри — 7 метр тăршшĕ. Вăл вĕрен татаччен мĕн тăршшĕ пулнă?" тесе куçарнă 29-мĕш страницăри 7-мĕш задачăна. Анчах ăна чăвашларах куçарма май пур. „Вĕрене 2 пайа касса татнă. Пĕр татăкĕн тăршшĕ 3 метр, теприн 7 метр пулнă. Касса валличчен вĕрен мĕн тăршшĕ пулнă?"

Кунашкал примерсем арифметикă учебникĕн иккĕмĕш пайĕнче те чылай. „Колбаса килограмĕ мĕн чул тăрат̌" тесе куçарас выранне (37-ш страницă, 357-мĕш задачă) ни чăвашла, ни вырăсла „килограм кăлпасси мĕн чул тăрат̌" тесе пăтраштарнисем кĕнеке куçаракан ĕсемпе редактăрĕ тирпейсĕр ĕçлени çинчен калаççĕ. Çăмăл йапаласенех кунта йăвăрлатса пĕтернĕ.

38-мĕш страницăра 364-мĕш задачăна „талăкăн тăваттăмĕш пайне вĕренекен шкулта тата килте вĕренсе иртерет" тесе куçарнă. Ăнланма йăвăр. Мĕншĕн-ха ăна акă çапла çеç куçармала пулман: „Вĕренекен ача талăкăн тăваттăмĕш пайне шкулта тата килте вĕренсе иртерет".

Мĕншĕн „йапала арчи йапалисемпе пĕрле 64 кг туртат̌" тесе куçарас выранне, „йапали-мĕнĕпе арча 64 кг туртат̌" тесе куçарас мар? (30 стр., 379 задачă). „20 пĕр пек кĕпе çĕленĕ" выранне „пĕр пек кĕпе 20 çĕленĕ" тесен авантарах пек (49 стр.). Çав страницăрах „весло" выранне „кĕсмен" сăмах çырма пулнă. Тата ыт. те, тата ыт. те.

Паллах, учебнике куçаракансемпе унăн редактăрĕ тимлĕрех, тĕплĕнрех ĕçленĕ пулсан çакă учитĕлсемпе вĕренекенсене кӳрентерекен çитменлĕхсем пулман та пулĕччĕç.

Арифметикă учебникĕсене малала кăларас пулсан, кăлтăксене тӳрлетмеле.

Т. А. Корењков.

Куславкка районĕнчи Тĕрлемес вăтам шкулĕн директăрĕ.

*) Н. С. Поповă. Арифметикă кĕнеки, пуçламĕш шкул ваљљи. I-мĕш тата II-мĕш пайĕсем. Чăвашгосиздат, 1938 çул.

РОССНАБСБЫТĂН

Чăваш уйрăмĕн складĕнче

пĕчĕк листалă кантăк

СУТЛĂХ ПУР.

Кантăкĕ парник рамисене, витесене т. ыт. те лартма йурăхлă.

Фондсăрах сутаççĕ.

АДРЕС: Шупашкар хули, Хĕрлĕ плошчĕт, 16.

2—1

ГОСУДАРСТВĂН ШУПАШКАРТИ КИРПĔЧ САВĂТНЕ йаланлăха ĕçлеме

БУХГАЛТĔР тата СЧЕТОВОД

КИРЛĔ.

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Хватер пур.

Дирекци.

2—1

ПИЧЕТЛЕМЕЛИ МАШИНКĂ

сутлăх пур

ЫЙТМАЛЛА: Шупашкар хули, Стройтехникум, тел. 3—44.

Дирекци.

Чăвашпромсойуза

економист-конйунктурис, бухгалтĕр, бухгалтĕр-економист

КИРЛĔ.

Чăвашпромсойуз.

2—1

Чăвашсен Коммунисла аслă йалхуçалăх шкулне кирлĕ:

Расчот йенĕпе ĕçлеме

БУХГАЛТĔР, КАССИР.

Аслă бухгалтĕр патне памала.

АДРЕС: Шупашкар хули, Ленинград урамĕ, 3.

Ректорат.

„ГЛАВКОЖОБУВЬПРОМ"ăн Чăваш республикĕнчи суту-илӳ базине йаланлăха ĕçлеме

счетовод-кассир, експедитăр, статистик

КИРЛĔ.

Адрес; ул. Заводская, Зеленый базар, д. № 12., телефон 7—74.

2—2

ЧАССР Вырăнти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн Иванăвăри кирпĕч савăтне йалан ĕçлеме

КИРЛĔ:

Икĕ бухгалтĕр, економист-плановик

Хватер пур.

Дирекци.

Чăвашсен Академилĕ театрне йалан ĕçлеме

ПЛАТНИКСЕМ-СТОЉАРСЕМ

КИРЛĔ.

Дирекцинчен ыйтса пĕлмеле.

2—1

Крайуполномоченный Цупашглавлита № 565. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 832. ф. 6. 58×84 п. л.